чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

215/26621/ № | Юн кун, 2014, юпа (октябрь), 29 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

# Ĕмĕрлĕхе юлакан ĕçсем

## Чăваш Ен ӳнерçисен пĕрлĕхĕ Атăлçи хутлăхĕнче лайăххисен йышĕнче

***Чăваш Республикин Художниксен союзĕ 150 яхăн ӳнерçе пĕрлештерет. Культура çулталăкĕнче вĕсем те ума пысăк тĕллевсем лартрĕç, палăртнă ĕмĕтсене пурнăçа кĕртес тесе ăнтăлаççĕ. Çитес çул та сăрă ăстисемшĕн ахальли мар: союза йĕркеленĕренпе 80 çул çитет. Çакăнпа çыхăннă тата ытти ыйтăва хускатрĕ художниксен ушкăнĕ ĕнер Правительство çуртĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулсан.***



cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

• *Владислав Николаев: «Йышăнсамăр пирĕнтен асăнмалăх парне».*

Йышра çаксем пулчĕç: Чăваш Ен Художниксен союзĕн правленийĕн председателĕ, Раççей Ӳнер академийĕн чăн членĕ, Раççей халăх художникĕ Ревель Федоров; искусствоведени докторĕ, Чăваш Республикин, Тутарстан Республикин, Раççей Федерацийĕн искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Чăваш Ен Патшалăх премийĕн виçĕ хут лауреачĕ, Раççей Ӳнер академийĕн хисеплĕ член-академикĕ Алексей Трофимов /вăл çак хисеплĕ ята нумаях пулмасть тивĕçнĕ/; Чăваш Республикин халăх, Раççей тава тивĕçлĕ художникĕ, Чăваш Ен Патшалăх премийĕн икĕ хут лауреачĕ Владислав Николаев, Чăваш Республикин, Пушкăртстан Республикин тата Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ художникĕ, Чăваш Ен Патшалăх премийĕн лауреачĕ Владимир Нагорнов скульптор; ЧР Художниксен союзĕн ӳнер фончĕн директорĕ Владимир Мудров тата ЧР Художниксен союзĕн секретарь-референчĕ Нина Васильева. Тĕл пулăва çавăн пекех ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов хутшăнчĕç.

Мĕн канăççăрлантарать паян илем ăстисене, мĕн пирки хĕпĕртет тата ыратать вĕсен чĕри? Çакна кашнийĕ сăмах илнĕ май пĕлме пултартăмăр.

Михаил Игнатьев вара хăйĕн чунне уçса пама пултарчĕ. Вăл пĕтĕм республикăшăн канăççăрланать. Культура çулталăкĕнче вара культура отраслĕ татăклă утăмсем тăвасса шанать, ялсенчи клубсемпе кану центрĕсем хăйсен ĕçне лайăхлатасса кĕтет. Республика ял культурине çĕклес тĕлĕшпе малалла ĕçлет, культура учрежденийĕсене тĕслĕх шая çĕклес тĕлĕшпе укçа-тенкĕ май килнĕ таран уйăрать. Ӳнерçĕсен шăпипе те кăсăкланать Михаил Васильевич, вĕсен произведенийĕсем складсенче тусанланса выртманшăн, халăх вĕсене килĕштернĕшĕн хĕпĕртет.

Тĕл пулăва та пĕр-пĕрне лайăхрах ăнланас, капланнă ыйтусене татса парас тесе йĕркеленĕ.

Ревель Федоров союз пирки каласа кăтартрĕ. 1935 çулта чăмăртаннă вăл, ун пуçламăшĕнче малтанхи тапхăртанах шанчăклă, пултаруллă ентешсем тăнă: Никита Сверчков, Юрий Зайцев, Моисей Спиридонов, ыттисем те. Паянхи ăру та аслисен тĕслĕхĕпе утать. Шел, пур союзри пекех, кунта та çамрăк сахалрах. Апла пулин те Чăваш Ен ӳнерçисен пĕрлĕхĕ пур енĕпе те Атăлçи хутлăхĕнче лайăххисен йышĕнче.

Тата та маттуртарах пулма мĕн чăрмантарать-ха? Союз ертӳçин шухăшĕпе – ӳнерçĕсене мастерскойсемпе вăхăтлăха çеç /пилĕк çула/ усă курма ирĕк пани. Вĕсем палăртнă вăхăт çитессе кĕтсе кирлĕ чухне юсав та тăвас темеççĕ, çĕнĕ хӳтлĕх пирки шухăшлама пуçлаççĕ. Совет влаçĕ вăхăтĕнче асăннă мастерскойсене шăпах ӳнерçĕсем валли тунă, тӳлевсĕрех яланлăхах панă. Халĕ самана улшăннă май саккунсем те çĕнелсе пыраççĕ çав.

Леонид Черкесов хула инфратытăмне лайăхлатас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсем пирки чарăнса тăчĕ. Шупашкар мĕнле пуласси ӳнерçĕсенчен те нумай килнине палăртрĕ. Ун тĕллевĕ çакăн пек: тĕп хулара çулленех 2-3 палăк кун çути курмалла. Çитес çуркунне паллă этнопедагогăн Геннадий Волковăн палăкĕ çĕкленĕ. Ун валли мĕн кирлине пĕтĕмпех тунă, гранит кӳрсе килнĕ. Юхан шыв портĕнче Крылов академик палăкĕ пуласса шанăç пур. Китай культурине, йăли-йĕркине темиçе çул тĕпченĕ йăхташăмăр Бичурин палăкĕ те илем кӳме пултарĕ Шупашкара çывăх вăхăтрах. Мастерскойсем тĕлĕшĕпе çĕннине нимех те калаймарĕ – депутатсем çапла йышăну тунă.

Владимир Нагорнов скульптор вара Атăл хĕрринче пулăçа халалланă палăк та, Чăваш Арбатĕнче Ефремов купса мăшăрĕпе "уçăлса çӳренине" те курма май килессе шантарчĕ. Унсăр пуçне Владимир Порфирьевич Шупашкарта ӳнерçĕсен Пĕтĕм тĕнчери симпозиумне йĕркелесси пирки ĕмĕтленнине асăнчĕ. Вăл хăй кăçал Кăнтăр Корейăра иртнĕ симпозиума хутшăннă. Ун шухăшне республика ертӳçи ырларĕ, ун валли çĕр тупса пама пулăшма шантарчĕ. Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – унашкал мероприятисем Чăваш Ен ят-сумне çĕклеççĕ, туристсене явăçтарма пулăшаççĕ.

Çитес çулхи юбилее çӳллĕ шайраирттерме ĕмĕтленеççĕ ӳнерçĕсем. Ĕмĕтленни çеç сахал, ун валли укçа-тенкĕ те кирлĕ. Алексей Трофимов пурне те тивĕçтерекен альбом-кĕнеке кăларма сĕнет, анчах каллех укçа-тенкĕпе çыхăннă. Михаил Игнатьев ку енĕпе те, ыттипе те пулăшма шантарчĕ. "Паян тунă ĕçсем ĕмĕрлĕхе юлаççĕ",– терĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА**

ÇĔНĔ ПРОЕКТ

# Хамăрăн сывлăхшăн кар тăма вĕренĕпĕр-и?

## Патшалăх сывă çынсен йышĕ пысăкланасса кĕтет

***Чăваш Енĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ кăларнă Указпа килĕшӳллĕн "Сывлăх профильне" хатĕрлĕç. Вăл муниципалитетсен малашнехи аталану стратегийĕн тĕп шăнăрĕ пулĕ темелле. Асăннă концепци халăх сывлăхне çутатса паракан документ кăна мар, унăн хăй тĕпленнĕ вырăнти пурнăçа сăнласа пуласлăхра мĕнлерех йĕркелессине кăтартакан программа та пулма тивĕç.***

"Чăваш Республикин сывлăх профильне" йĕркелекенсенчен пĕри – Республикăн сывлăха çирĕплетмелли тата профилактика центрĕн ертӳçин çумĕ Наталья Ивановна Володина. Проект тĕшшине мĕнре курать-ха вăл?

– Халăхăн сывлăхĕ, пĕлетĕр ĕнтĕ, медицина вăйсăрлăхĕпе кăна çыхăнман. Тĕрĕссипе вăл 80 процент таран эпир пурăнакан хутлăхран килет. Эппин, пирĕн патшалăх сывă граждансен йышĕ пысăкланасса кĕтет тĕк этеме хăй пурăнакан вырăнта йĕркеллĕ пурăнма условисем туса памашкăн тивĕç. Сывлăх тăрăмне лайăхлатас тетпĕр пулсан обществăн çакăншăн хăйĕн те çине тăмалла. Калăпăр, эпир тĕрĕс апатланассишĕн хамăрсăр пуçне никам та яваплă пулаймасть, сиенлĕ йăласенчен тытăнса тăрасси те хамăртан килет. Сывлăхшăн тăрăшсан экологи тасалăхĕшĕн кĕрешме те хăш-пĕр чухне хамăрăн вăйпах пултаратпăр вĕт, – хута каякан программа медицина кăтартăвĕсемпе никĕсленнĕ документ маррине çирĕплетет Наталья Ивановна.

Проекта хатĕрлекенсем сывлăх профильне çутатакан тытăма çапларах кураççĕ: демографи, халăхăн социаллă ушкăнĕсен сывлăх портречĕ, сывлăха сиенлетме пултаракан факторсем, диспансеризаципе профилактика, сывă пурнăç йĕркине пропагандăласси, медицина пулăшăвĕпе, социаллă объектсемпе усă курас майсем, çул-йĕрпе транспорт инфратытăмĕ, экологи, культурăпа кану хутлăхĕ, ĕçлев, пурăнмалли условисем, ял-хула строительстви. Асăннă пайсене тĕплĕн тишкерсе кашнин тĕлĕшпе халĕччен мĕн пурнăçланине тата çитес вунă-çирĕм çулта мĕн тумаллине палăртмалла. Планлакан кашни ĕç валли мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ кирлĕ пуласса та кăтартмалла. Çапла майпа вара аталану стратегийĕн никĕсĕ йĕркеленет те.

– Шел, хальлĕхе, манăн шухăшпа, çак программăн чăн пĕлтерĕшне муниципалитетсенче ăнлансах çитеймен-ха. "Сывлăх профилĕ" тĕпрен илсен районăн малашлăх çулне кăтартакан маяк вырăнĕнче пулма тивĕç. Кашни ял тăрăхĕнче уйрăммăн мĕнле ыйтупа çине тăмаллине кăтартса паракан документ алă айĕнче кăна мар, халăхăн кусĕ умĕнче те пулĕ-çке. Темиçе çуллăха йышăнакан аталану стратегине çутатнă документа вара чиновниксем уçкаласа пăхнисĕр пуçне кам питех вуласа интересленĕ? Акă еплерех куратăп эпĕ çĕнĕ проектăн тĕшшине, – уçăмлатать Н.Володина.

**ПИРĔН РЕСПУБЛИКĂРА ЧИ АНЛĂ САРĂЛНĂ ЧИР-ЧĔР ЙЫШНЕ МĔН КĔНИ ПИРКИ ЫЙТĂМА ХУТШĂННИСЕНЧЕН ÇУРРИ ЫТЛА ХĂЙĔН ШУХĂШНЕ «АЛКОГОЛИЗМ» ТЕСЕ ПАЛĂРТНĂ**

Асăннă программăна хатĕрленĕ май Республикăри сывлăха çирĕплетмелли медицинăпа профилактика центрĕ интернет-ыйтăм иртернĕ. Унăн тĕллевĕ – халăх сывлăха упрас тата çирĕплетес тĕлĕшпе мĕн шухăшланине пĕлесси. Малтанхи кăтартусене пĕтĕмлетнĕ те ĕнтĕ. Кăсăклă ӳкерчĕк тухса тăрать пирĕн ума. Акă хăш-пĕр ыйту-хуравпа паллашар-ха. Пурнăçра чи пысăк хаклăх шутне ыйтăма хутшăннă 2000 яхăн çынран 90 проценчĕ "сывлăх" тесе палăртнă. Сывлăхшăн пуринчен ытла кам яваплине кăтартма сĕннĕ вырăнта 90 яхăн проценчĕ "харпăр хăй" хурава çырнă. Сывлăх пахалăхĕ мĕнрен ытларах килни пирки респондентсен 85 проценчĕ "пурнăç йĕрки /апатлану, сиенлĕ йăласем, кун йĕрки т.ыт.те/" тесе çирĕплетнĕ. Пирĕн республикăра чи анлă сарăлнă чир-чĕр йышне мĕн кĕни пирки ыйтăма хутшăннисенчен çурри ытла хăйĕн шухăшне "алкоголизм" тесе палăртнă. Пĕр сăмахпа, хуравсем республикăра пурăнакансен шухăш-кăмăлне аван кăтартаççĕ. Ыйтăм пĕтĕмлетĕвĕ вара "Сывлăх профильне" хатĕрленĕ чухне пусăм мĕн çине тумаллине систерет. Калăпăр, ватăсем кăна юлнă ял пуласлăхра республика картти çинчен ан çухалтăр тетпĕр пулсан унта çамрăксене туртăнмалли майсем /садик-и, лайăх ĕç вырăнĕсемлĕ предприяти-и, строительство валли çăмăллăхсем-и/ йĕркелемелле. Çамрăксем чылай-ха тейĕпĕр, анчах, тĕслĕхрен, ялта спортпа туслисем валли нимĕнле объект та çук. Ял тăрăхĕн "Сывлăх профилĕнче" ку енĕпе мĕнле пуçару тăвассине кăтартса хăвармаллах. Çапла майпа, проекта хута яракансен шухăшĕпе, кирек хăш хутлăхра та сывлăхлă пурăнма меллĕ те хătлă пулĕ.

■ **Ирина ПУШКИНА**



КУН хыççăн КУН ☎ 56-04-26, 28-82-91

### Никама та манмаççĕ

***Федерацин Атăлçи округĕнчи шырав отрячĕсен "Никама та манман" слечĕ вĕçленнĕ. Киров облаçĕнчи "Строитель" сывлăх лагерĕнче иртнĕ мероприятие 375 çын хутшăннă.***



Чăваш Ен чысне унта Шупашкарти 57-мĕш вăтам шкулăн "Набат", 5-мĕш гимназин "Атăл", И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн "Астăвăм", И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн "Георгий хăйăвĕ" тата республикăри суд приставĕсен управленийĕн "Патриот" отрячĕсем хӳтĕленĕ. Ăмăрту икĕ тапхăрпа иртнĕ. Пĕрремĕшĕнче шырав пĕрлешĕвĕсен кăçалхи сезонне пĕтĕмлетнĕ. Чăваш Ен команди "Информаци" номинацире (шырав ĕçĕн пахалăхĕпе калăпăшне хакланă) çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ, отряд ертӳçисен йышĕнче пирĕн ентеш "кĕмĕл" çĕнсе илнĕ, "Ӳсĕм" номинацире виççĕмĕш кăтартупа палăрнă. Иккĕмĕш тапхăрта чăваш шыравçисем техника хăрушсăрлăхĕн конкурсĕнче тата пирвайхи пулăшу парассипе – иккĕмĕш, экспозицисен конкурсĕнче виççĕмĕш пулнă. Слет пĕтĕмлетĕвĕпе пирĕн республика команди иккĕмĕш вырăн йышăннă. Палăртмалла: шырав отрячĕсен "Никама та манман" слетне РФ Президенчĕн Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич хушăвĕпе йĕркеленĕ. Ăна Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 70 çул çитнине халалланă.

**А.МИХАЙЛОВ.**

### Библиотека – 55 çулта

***Çак кунсенче Шупашкарти Л.Н.Толстой ячĕллĕ библиотека хăйĕн черетлĕ юбилейне паллă тăвать.***

Куç курманнисем валли ятарласа 55 çул каялла уçнă учреждение сусăррисем кăна мар – вĕсен тăванĕсем, коррекци шкулĕн ачисемпе студентсем, инвалидсене пулăшассипе ĕçлекен специалистсем, тĕпчевçĕсемпе общество деятелĕсем çӳреççĕ. Вулавăшра ятарлă 180 пин кĕнеке упранать, çавăн пекех унта компакт-дисксем, кассетăсем, тĕрлĕ пособи пур. Кĕнеке фончĕ çултан çул çĕнĕ кăларăмсемпе, хальхи йышши хатĕрсемпе пуянланать. Ятарлă студире илемлĕ хайлавсем çыртарса "калаçакан" кĕнекесем хатĕрлесси те йăлана кĕнĕ. Библиотека пулăшăвĕпе çулталăкне 3,5 пин çын усă курать, 70-шĕ патне киле пыраççĕ. Юлашки çулсенче вулавăш çĕнелнине палăртмалла. Акă 2012 çулта учреждение тифлокомпьютер центрĕ уçăлнă. Çак тапхăрта унта 110 инвалид пĕлӳ илнĕ.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### "Вĕрентекенпе сăн ӳкерĕнер"



***Çак ятпа Елчĕк районĕнчи Кушкă шкулĕнче сăн ӳкерчĕксен конкурсĕ иртнĕ. Учитель кунĕнче пуçарнă кăсăклă мероприятирен пĕр ача та айккинче пăрăнса юлман, пурте юратнă вĕрентекенĕ патне васканă.***

Хальхи вăхăтра сăн ӳкерĕнмешкĕн фотоаппарат та кирлĕ мар: алăра карас телефон е планшет пултăр кăна. Çавăнпа паянхи шкул ачи кашни утăма Интернет-сайта вырнаçтарма пултарать. Юлашки çулсенче çамрăксен хушшинче телефона усă курса кампа та пулин ӳкерĕнес юхăм сарăлчĕ. Уйрăмах паллă çынсемпе сăнланма тăрăшать яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç. Хальхи саманара çак пулăм пысăк пĕлтерĕшлине кура Кушкăсем конкурс пуçарнă. Нумаях пулмасть унăн çĕнтерӳçисене те палăртнă. Чи пултаруллин ятне 11-мĕш класра вĕренекен Люба Мышкина тивĕçнĕ. "Вĕрентекенсемпе кашни кун сăн ӳкерĕнме май çук, пысăк уявсенче кăна. Çавăнпа çĕнĕ конкурса пурте хапăлласа йышăнтăмăр. Ку пирĕншĕн питĕ кăсăклă ĕç пулчĕ", – пĕлтернĕ хĕр.

**О.МАСЛОВ.**

### Челябинскран – парнесемпе

***Чăваш Ен спортсменĕсем ирĕклĕ мелпе кĕрешес енĕпе "Юность России" физкультурăпа спорт обществин парнисене çĕнсе илессишĕн Челябинскра иртнĕ ăмăртуран медальсемпе таврăннă.***

Турнира çĕршывăн 23 регионĕнчи 1998-2002 çулсенче çуралнă 100 ытла хĕр ача хутшăннă, вĕсем икĕ виçере вăй виçнĕ. Пирĕн республика чысне унта Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищин студенчĕсемпе хулари 1-мĕш спорт шкулĕнче Татьяна Кириллова, Ольгăпа Наталья Смирновăсем патĕнче ăсталăха туптакан пикесем хӳтĕленĕ. Ăмăртура спортсменсем пухмача 3 ылтăн, 2 кĕмĕл тата 2 бронза медальпе пуянлатнă. Пьедесталăн чи çӳллĕ картлашки çине Ксения Смирнова, Марина Николаева тата Ирина Николаева хăпарнă. Надежда Красновăпа Екатерина Гаврилова иккĕмĕш кăтартупа палăрнă, Наталья Дмитриевăпа Валерия Миронова хăйсен ушкăнĕсенче виççĕмĕш вырăнсене йышăннă. Мала тухнисем чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче Çĕнĕ Шупашкарта иртекен çĕршыв ăмăртăвĕнче тупăшĕç.

**А.ПЕТРОВ.**

**Çанталăк çинчен**

Паян ăмăр çанталăк пулать. Çил хĕвел анăçĕнчен 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 4 градус ăшă, çĕрле 0 градус.** Атмосфера пусăмĕ 756 мм, сывлăшри нӳрĕк 93 процент.

**Кун тăршшĕ 9 сехет те 26 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 3 градус ăшă, çĕрле 2 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 757 мм, сывлăшри нӳрĕк 76 процент.

**Кун тăршшĕ 9 сехет те 21 минут.**

АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

# Технологи çĕнелет – пахалăх ÿсет

## Етĕрне завочĕ çулталăкĕпех кирпĕч кăларать



Владимир Тукмаков директор мана кăмăллăн йышăнчĕ, заводăн кăçалхи 9 уйăхри тĕп кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ.

Цифрăсем пур енĕпе те ÿсĕмлĕ. Хăш-пĕр заводра рабочисем вăхăт-вăхăтпа ĕçлеççĕ, хĕлле укçасăр лараççĕ. Кунта вĕсене кÿрентермеççĕ. Коллектив ертÿлĕхĕ мал курăма тĕпе хурса технологие çĕнетсех тăнăран чĕр тавар çулталăкĕпех ĕçлеме çитет.

Кăрлач-авăн уйăхĕсенче 13 млн ытла чĕрĕ кирпĕч çапнă /пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 8,4% ытларах/. Сутлăх тавар калăпăшĕ – 11,6%, ăсатнă продукцин 20,3% ÿснĕ. Коллектив йышĕ – 7,4%, ĕç укçи 7,2% хушăннă. Рабочисен вăтам шалăвĕ авăн уйăхĕнче 22996 тенке çитнĕ.

– Эпир хамăра пĕр çемьери пек туятпăр, ĕçе ирсерен пĕр ĕмĕт-тĕллевпе килетпĕр, производствăра пурте вăй çитнĕ таран тăрăшатпăр, – терĕ Владимир Петрович. – Ĕçлемен çын çеç йăнăшмасть, анчах вĕсене вăхăтра асăрхаса çийĕнчех тÿрлететпĕр, текех тăвас марччĕ тетпĕр. Çĕнĕ технологисене сăнасах тăратпăр, вĕсемпе ĕçре усă куратпăр. Çавна пула кирпĕч пахалăхĕ ÿсет, хăвăрт сутăнать.

Завода пурте чунтан юрататпăр. Никам та ăна пăрахса урăх çĕре куçасшăн мар. Эпир те кунта çемйипех вăй хуратпăр. Мăшăрăм та, ывăлăмсем те.

Производство ÿсĕмĕ пĕлĕве тăтăш ÿстернинчен те килет. Специалистсем тĕллевлĕ курссенче час-часах пулаççĕ.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

ТĔРĔСЛЕВ

# Айăпланнисен те право пур

***Юсанмалли 6-мĕш колонире тĕрĕслевсем ирттернĕ май ЧР юсанмалли учреждениисенче саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан Шупашкар прокуратури саккуна пăснă тĕслĕхсене тупса палăртнă.***

Колонире уголовлă ĕç пусармалли сăлтавсем пулманнине пăхмасăр учреждени оперуполномоченнăйĕ айăпланнă çын суранланнă тĕслĕхпе колони пуçлăхĕн ячĕпе рапорт çырнă, преступлени паллисем пурри çинчен евитленĕ. Чăннипе вара преступлени пулни е преступлени тума хатĕрленни çинчен нимĕнле пĕлтерÿ те пулман. Çавна май пăтăрмаха сăлтавсăрах регистрацилеме, тĕрĕслев ирттерме тивнĕ. Ку тĕслĕхпе учреждени пуçлăхĕн ячĕпе представлени çырнă.

Асăннă колонирех судпа айăпланнисенчен пĕрне ĕçе вырнаçтармалли хушусăрах кăçалхи ака уйăхĕнчен пуçласа утă уйăхĕччен клуба тирпейлеме, пÿлĕмсене юсама явăçтарнă. Хăрушсăрлăх техникине пăхăнманнине кура вăл суранланнă.

Çав вăхăтрах айăпланнă тепĕр çын, колонири клубра хуçалăх заведующийĕнче ĕçлекенскер, чăннипе çак учреждени ертÿçин тивĕçĕсене пурнăçланă. Çÿлерех асăннă çынна тĕрлĕ ĕç хушнă, пурнăçланă ĕçшĕн ăна хăйĕн укçипе кунти лавккаран туянакан апат-çимĕçпе, сигаретпа тÿленĕ. Колони ертÿçисем вара çакна курмăш тунă.

Унсăр пуçне айăпланнă тепĕр çын, çав вăхăтра медчаçре сиплевре пулнăскер, ĕçе тухнине ĕнентерсе табеле тĕрĕс мар кăтартусем кĕртнĕ. Ку тĕслĕхпе те представлени çырма тиврĕ.

■ **Александр ЗОТОВ, ЧР юсанмалли учрежденисенче саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан Шупашкар прокурорĕ**

ĔÇЛЕВ

# Центрта ырă сунса кĕтсе илеççĕ

## Кашнин ыйтăвне тивĕçтерме тăрăшаççĕ

***Шупашкар районĕнчи ĕçпе тивĕçтерекен центр Кÿкеçри Шуршăл урамĕнчи 4-мĕш А çуртра вырнаçнă. Çул хĕрринчен курăнсах ларать. Авточарăнуран 30 метрта çеç. Алăкĕнчен çын вĕçĕмсĕр кĕрет-тухать.***

Кăçалхи 9 уйăхра учреждение ĕç тупса пама ыйтнă 1926 çынна /пĕлтĕрхи çав хушăра – 1994/ йышăннă. Кунта килнисен 76,8% – ялсенче пурăнакансем. Пĕлтĕр 16-29 çултисен йышĕ центра пынă мĕн пур çыннăн – 45,9%, кăçалхи 9 уйăхра 41,6% танлашнă. Çак кăтарту çамрăксен пĕр пайĕ пирĕн служба тĕрев памасăрах пурнăçра хăйĕн вырăнне тупнине пĕлтерет. Учреждение йышăннисен 38,5% хăйĕн ирĕкĕпе ĕçрен кайнă, 2,4% унтан кăларса янă.

«Юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне центрта ĕççĕр юлнă 208 çын шутра тăчĕ /2013 çулхи авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнче – 240/, – тет Олег Иванович Александров директор. – Ку йышра 88 арçын /учреждение шутра тăракансен 42,3%/, 120 хĕрарăм /57,7%/. 30,3% – Кÿкеç поселокĕнчен, 69,7% – ялсенчен. 16-29 çултисем – 31,7%, пенси çулне çитиччен-хисем – 10,6%, ытти çулти – 57,7%. Пĕтĕм ушкăнăн 68,8% хăйĕн ирĕкĕпе ĕçрен тухнă. Организацие пĕтернĕрен е унăн штатне пĕчĕклетнĕрен 6,3% унтан пăрахса кайма тивнĕ. 2,9% вăтам, професси пĕлĕвĕ паракан шкулсенчен вĕренсе тухнă. 16,8% – производствăна хăйĕн тÿпине хывма пултаракан инвалид. Ĕçлеттерсе юсанмалли учрежденирен ирĕке тухсан пĕр çынна шута илтĕмĕр. Пирĕн пата çÿрекенсенчен 13,9% центрта сакăр уйăх е ытларах ĕç кĕтрĕ, кашни вăтамран 3,9 уйăх шутра тăчĕ».

Çак уйăх пуçламăшĕ тĕлне кунта пуçтарăннă йыш районти ĕçлеме пултаракан вăй питти çынсен 0,53% чухлĕ çеç пулнă.

Ĕç вырăнĕ туса паракансем учреждение 5246 вакансии пуррине, вăл шутран 86,4% рабочи специальноçĕпе çыхăннине пĕлтернĕ. Вакансисен банкĕнче 1262 рабочи вырăнĕпе паллашма пулать. Иртнĕ уйăх вĕçĕ тĕлне кашни ĕççĕр çын пуçне 6,1 вакансии сĕннĕ.

«Центр 1660-шне, çав шутран çул çитмен 752 ачана вĕренÿрен пушă вăхăтра тата каникулта, ĕçе вырнаçма пулăшрĕ, – терĕ директор çумĕ Вячеслав Егоров. – 49,9% – хĕрарăм, 37,8% – 16-29 çултисем, 78,3% ялсенче пурăнать, 68 инвалид, 32-шĕ тĕрлĕ заведенирен вĕренсе тухнă».

Учреждение шута илнисене общество ĕçне явăçтарма 36 килĕшÿ çирĕплетнĕ. 3-шне М.В.Ибрагимовăн уйрăм предприятине – тирпейлÿçе, 4-шне «Акашевская» кайăккĕшĕк фабрикине – рабочипе чăх пăхакана, 10-шне «ТАА-

29 çултисенчи 830 тата çартан таврăннă 15 çамрăкпа професси суйласа илес ыйтупа калаçнă. 160 çынна, вăл

79 ачине явăçтартăмăр. Унта Çатра Хочехмат тата Чăрăшкасси шкулĕсенчен – 29 тата 12, Мăналран – 36, Ишекрен



*● Шупашкар районĕнчи ĕçпе тивĕçтерекен центр коллективĕ. Пĕрремĕш ретре, сулахайран сылтăмалла: А.С.Кулакова инспектор, А.Н.Васильев водитель, О.И.Александров директор, унăн çумĕ В.А.Егоров, П.Г.Федоров водитель, Т.В.Мухаметшина инспектор. Иккĕмĕш ретре, сулахайран сылтăмалла: В.П.Ильина, Л.Г.Порфирьева инспекторсем, Л.П.Григорьева тĕп бухгалтер, Р.И.Миронова, Р.К.Чайкова, О.Н.Хозилова, Н.Н.Семенова инспекторсем.*

Сервис» обществăна рабочие ĕçе илнĕ. Пĕрне «Чăваш бройлерĕ» обществăна – аш тиекене, 8-шне «Чăваш Ен-Мед» страхлакан компание – документ çыруçине, 20-шне «Техпортал-С» обществăна рабочие йышăннă. 32-шне «Зеленстрой» обществăна – çулйĕр рабочине, чечеклентерекене, ешĕллентерекене, 5-шне «Юрма» агрохолдинга – рабочие, 4-шне «Ривьера» обществăна çĕвĕçе вырнаçтарнă.

«15-шĕ халĕ – Раççей Ăслăлăх Академийĕн Н.В.Цицин ячĕллĕ тĕп ботаника сачĕн Шупашкарти филиалĕн сад рабочийĕ, 4-шĕ – «Бэби Дрим» тата «Колос» обществăсен тĕркемçи, 3-шĕ – «Укçа-тенкĕпе тивĕçтерессин тата производство йĕркелессин тата информатизаци центрĕ» муниципалитет учрежденийĕн юсав рабочийĕ, – паллаштарчĕ Наталия Семенова ертсе пыракан инспектор. – 143-шĕ – ял администрацийĕсен çын çÿрекен общество вырăнне хăтлăлатас тĕлĕшпе тăрăшакан рабочи тата документ çыруçи. 3-шĕ «Автосервис» обществăра производство-служба пÿлĕмĕсене тасатаканра, 8-шĕ «ЧВФ» общество рабочийĕнче, 6-шĕ – Ленин ячĕллĕ, 11-шĕ Куйбышев ячĕллĕ хуçалăхсенче вăй хурать. 4-шĕ – Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочĕн, 9-шĕ – «Приволжское» АУО рабочийĕ. Общество ĕçне 293 çынна ятăмăр. Вĕсене ĕç укçи тÿлеме республика хыснинчен 284 пин тенкĕ уйăрнă».

Асăннă тапхăрта центрта 1324 çынпа, çав шутра 66 ĕççĕрпе, 736 хĕрарăмпа, 14-шутра 16-29 çултисенчи 79 çамрăка, 77 хĕрарăма çĕнĕ профессие вĕренме янă.

Ĕççĕрлĕхе пĕтерме, ĕç тупас тĕллевпе шырав меслетне алла илмешкĕн пулăшма учреждение «Ĕç шыракансен клубĕ», «Çĕнĕ старт», «Ĕçе вырнаçмалли технологи» программăсене пурнăçа кĕртеççĕ. Социаллă адаптаци мероприятине 130-ăн хутшăннă.

Регионсене ĕç вăйĕпе тивĕçтерме çирĕплетнĕ килĕшĕве пурнăçласа районтан 37 çынна, çав шутра 2 ĕççĕре Мускавпа Тула облаçĕсенчи ял хуçалăх предприятийĕсене пулăшма янă.

«Центр çул çитмен ачасене вăхăтлăха ĕçе вырнаçтарма 30 килĕшÿ çирĕплетрĕ, – терĕ Рената Чайкова ертсе пыракан инспектор. – 752-шĕн – ашшĕ-амăш хÿттисĕр тата тăлăха юлнă – 12, нумай ачаллă çемьери тата ашшĕне е амăшне çухатнă – 97, тупăш сахал илекен çемьесенче çитĕнекен – 616, çул çитменнисен комиссийĕнче шутра тăракан 5 ачан – ыйтăвне тивĕçтертĕмĕр. Çĕньялсен – 85, Толик Хураски шкулĕн – 42, Ишлей ял тăрăхĕнчи – 52, Тутаркассисен – 31, Вăрман Çĕктер шкулĕн – 29, Тренккассисен 37 ачи вĕренÿрен пушă вăхăтра тата çуллахи каникулта шкул таврашне, ял тăрăхне хăтлăлатма хутшăнчĕ, вăрçăпа ĕç ветеранĕсене килти хуçалăхра пулăшрĕ, районти организацисенче вăй хучĕ. Çак ĕçе Атайкассисен – 33, Çĕньял Покровски шкулĕн – 51, Апашсен – 29, Анат Кинер шкулĕн – 36, Кăшавăшсен – 25, Кÿкеç лицейĕпе шкулĕн 19 ачи хаваспах çÿрерĕ. Çĕньял тăрăхĕн администрацийĕ – 14, «Зеленстройпа» «Приволжское» обществăсем – 24 тата 35, «Шупашкар МТСĕ» тата «ТАА-Сервис» обществăсем – 4-шар, «ИЗВА» ООО – 10, «Тĕркем центрĕ» тата «Электрощит» обществăсем – пĕрер, «ЧВФ» – 15, Ленин ячĕллĕ тата Куйбышев ячĕллĕ ЯХПКсем 14 тата 5 çынна общество вырăнне тирпей-илем кĕртме явăçтарчĕç».

Вăхăтлăх ĕçре тăрăшнăшăн çул çитмен ачасене ĕç укçи тÿлеме республика хыснинчен 489996 тенкĕ уйăрнă.

Учреждени вакансисен 8 ярмăрккине ирттернĕ. Унта «Медиятехнологи», «Чăваш бройлерĕ», «Юрма» агрохолдинг», «Ăшă энергосечĕсем», «ЧВФ», «Ивушка» обществăсем, «Атлашевский» ЯХК, «Чăвашавтоçул» АУО филиалĕ хутшăннă. Ĕçлеттерсе юсанмалли учрежденисенчен ирĕке кăларнисенчен вакансисен ятарлă ярмăрккине йĕркеленĕ. Унта 229-ăн пынă, 53-шĕ ĕç тупнă.

Центр ĕçе илекенсене, ăна шыракансене информаци вăхăтра пĕлтерсе тăма тăрăшать. Ку енĕпе пичетпе, радиопа, телекурав, сайтпа усă курать. Çак уйăхăн 1-мĕшĕ тĕлне учреждени сайтне 332 хыпар вырнаçтарнă, пичетре 11 информаци кун çути курнă.

Ĕçе вырнаçтарасси пирки çирĕплетнĕ килĕшĕве пурнăçласа хăйсен вырăнне чылай хушă тупайман 16 çын, çав шутра 7 инвалид, ĕçлеттерсе юсамалли колонирен ирĕке кăларнă пĕр çын, нумай ачаллă çемьере тата ашшĕне е амăшне çухатнă 6 çамрăк, пенси çулне çитсе пыракан 2 çын ыйтăвне татса пама пулăшнă. Çак ушкăна ĕç укçи тÿлеме ЧР бюджетĕнчен 38483 тенкĕ куçарнă.

«Профессин вăтам пĕлĕвне илнĕ, ĕçе вырнаçма пуçласа тĕллев лартнă 18-20 çултисенчи специалистсенчен 7-шĕ «Ленкост 21», «Колос», «Жилкомцентр», «Сире валли», «Микрон» обществăсенче, А.Н.Тихоновăн уйрăм предприятийĕнче вăхăтлăха вăй хучĕç, – терĕ Оксана Хозилова ертсе пыракан инспектор. – Патшалăх центра ку категорие хавхалантарма та укça /3963 тенкĕ/ çитерчĕ. Информацин «Шухăшла та пуй» пĕрлехи кунĕнче бизнес пуçарас текенсемпе «Харпăр хăй ĕçне мĕнле йĕркелемелле?» тренинга 3 хутчен ирттертĕмĕр. Унта ĕççĕр çÿрекен 35 çын хутшăнчĕ. 4-шне хăйĕн ĕçне пуçарма Чăваш Ен хыснинчен субсиди 58800-шер тенкĕ патăмăр. Вĕсем çÿç касаççĕ, тумтир çĕлеççĕ, транспорт юсаççĕ. Пĕри уйрăм предпринимателе патшалăх органĕнче шута илме тăратмалли, патшалăх пошлини тÿлемелли документсем çырса хатĕрленĕшĕн, бланксем туяннăшăн республика бюджетĕнчен 850 тенкĕ илчĕ.

Висĕ çула çитиччен ача па килте ларакан 25 амăшне çĕнĕ специальноçа вĕренме ятăмăр. Çав йышран 10-шĕ «1-С: предприяти» тата «1-С: суту-илĕве йĕркелесси», 2-шĕ «Пулăшу ĕçĕ» тата «Персонал менеджерĕ» специальноçсем, 4-шĕ маникюрпа парикмахер, 8-шĕ водительсен «В» категорийĕ енĕпе квалификацие ÿстерчĕ».

Пенсие тухмалли вăхăт çитнĕрен тивĕçлĕ канăва кайнă 3 çынна çулталăк вĕçлениччен професси пĕлĕвĕ пама палăртнă. Кăçалхи 9 уйăхра вĕсенчен 2-шĕ компьютер операторĕ пулма хатĕрленнĕ.

«Центрăн кăçал республикăн ĕç рынокĕнчи лару-тăрăва çăмăллатмалли программипе килĕшÿллĕн ĕççĕр 5 инвалида ĕçе вырнаçтармалла, – пĕлтерчĕ Лиана Порфирьева ертсе пыракан инспектор. – Тĕллеве пурнăçлама, уйрăммăн илсен вĕсем валли ĕç хатĕрĕ туянма килĕшÿ çирĕплетнĕ. Халĕ «Зодчий-Универсал», «Батыр», «Фалинда», «АТЦ-2» обществăсенче, Е.И.Шурнов предприятийĕн тирпейлÿçинче, повар пулăшуçинче, çĕвĕ мастерĕнче, автобус тасатуçинче, сутă ăстинче вăй хураççĕ. Нумай ачаллă ашшĕ-амăшне ĕçе вырнаçтарма ĕç вырăнĕсем тума субсиди уйăрмалли программăпа килĕшÿллĕн «Чăваш бройлерĕ» обществăна аш ваклакана, Шурновăн уйрăм предприятине сутуçа илнĕ».

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# Вĕренÿ тытăмĕ бюрократи читлĕхĕнчен хăтăлĕ-и?

Хальхи вăхăтра педагог сăнарĕ обществăн ăнлавĕнче еплерех калăпланать? Çакăн çинчен шухăша путатăн та – эпир ача-пăча пулнă вăхăт хыçа юлнине, паянхи ÿкерчĕк ун чухнехинчен пачах урăхлине куратăн. Уççăн калам: пирĕн йăхра учительсен династийĕ темиçе ăруран тăрать – танлаштарма пушшех меллĕ. Асанне каласа панисем – хăлхарах, аннен ĕç-хĕлĕ – асрах, пичче-аппан педагог каçалăкĕ – куç умĕнче. Висĕ ăрăва çыхăнтараканни – кашниех хăйсенчен мĕн çирĕп ыйтнине тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлама тăрăшни. Аслă шкулта пĕрле вĕреннĕ тусăмсенчен чылайăшĕ вĕрентекен профессине суйларĕ – вĕсемпе хутшăннă май улшăну тăтăшах пулса пынине сăнатăн. Ăнсăртран тĕл пулсан пĕр-пĕрин çинчен ыйткаласа пĕлнĕ самантра вара ĕç пирки чылай пĕлĕш: «Çаплипех хут варалатпăр. Çыратпăр та çыратпăр», – тесе хуравлать. Тепĕр тесен вĕсен темĕн тĕрлĕ хут ĕçне пурнăçламалли ашшĕ-амăшĕн пухăвĕсенче те аван сисĕнет. Икĕ сехетрен кая мар тăсăлаканскерте вăхăтăн çуррине тĕрлĕ документ çырса-хатĕрлесе ирттеретпĕр. Хамăр шкул ачи чухне вара аттеаннене пухура хаваслă концертпа та хавхалану кÿме ĕлкĕреттĕмĕр. Асăннă мероприяти, шел те, паян çивĕч ыйтусене сÿтсе явнипе /ытларах чухне – шкул, класс фондне ашшĕ-амăшĕн кĕсйинчен пулăшу кÿмелли çинчен/ пуçра çыхăнать тĕк ĕлĕкрех уяв евĕр туйăнатчĕ.

Вĕрентекенĕн курăнман ĕçĕ нумай. Хальхи вăхăтра тата кашни вак-тĕвеке хут çинче çырса кăтартмалли чылайăшне тарăхтармаллипех тарăхтарать. Акă кăçал Чăваш Енре «Чи лайăх класс ертÿçи» ята тивĕçнĕ Гузель Хайртдиновăран интервью илнĕ чухне вăл чунне çапларах уçнăччĕ: «Мăшăрăма унăн ĕçĕ пирĕннипе танлаштарсан мĕнле лайăххи, чĕптĕм те киле килменни çинчен калатăп та мана «ĕçÿсене шкултах туса пĕтерсе кил эппин» тет. «Ун пек пулсан манăн унтах çĕр каçма тивет», – куларах хуравлатăп эпĕ».

Вĕренÿ тытăмĕ «инноваци», «модернизаци» терминсемпе куллен, кашни утăмра усă курни, эпир вĕреннĕ вăхăтра никам хушмасăр, ниçта та пайăррăн палăртмасăр тунă пуçарăвах паян «проект» янăракан сăмахпа унта та кунта палăртни çитĕнекен ăру чăннипех те пахарах пĕлÿ илнине çирĕплетет-ши? Вĕренÿ учрежденийĕн администрацийĕ тĕркем-тĕркем шурă хута вараласа темиçе тĕрлĕ инстанцие отчет хыççăн отчет çитерсе мĕн чухлĕ хаклă вăхăта сая кăна ямасть-ши? Чăннипех кирлĕлĕхĕ пысăк-ши çакнашкал бюрократилĕхĕн? Çак ыйту, паллах, мана кăна мар, нумай çынна канăçсăрлантарать. Вĕренÿ тытăмĕнче чунне парса ĕçлекенсене – пушшех. Ара, çĕр-çĕр штук хут çырнин ахрăмĕ палăрсах каймасть-çке.

Тинех çак ыйтусене патшалăх ертÿлĕхĕ умĕнче уççăн çĕклени çинчен илтрĕм те – тунмастăп: хĕпĕртерĕм. Пĕччен хулă авăнать теççĕ те – ыйтăва хальхинче анлă форум «çавра сĕтелнех» кăларни – хăюллă утăм. Юпа уйăхĕн 14-15-мĕшĕсенче Пензăра Пĕтĕм Раççей халăх фрончĕ йĕркелении пе «Пахалăхлă вĕрентÿ – çĕршывшăн» форум иртнĕ. Унта Раççей Президенчĕ Владимир Путин та хутшăннă. Асăннă мероприятие Чăваш Енрен те сумлă делегаци кайса килчĕ, форум хыççăн унăн йышĕнчи çынсем хăйсен шухăш-кăмăлне журналистсене каласа кăтартрĕç. Тÿрех калам, кашниех анлă тĕл пулуран хавхаланса, ырă улшăнусем пирки пысăк шанăçпа таврăннă. Форума никам та хатĕр докладпа, проектпа паллаштарма кайман иккен. «Сĕнÿсем чăнахах та халăхран /тĕрлĕ шайри чиновниксенчен мар/ пулнипе, чи пĕлтерĕшлисем пленарлă канашлура çĕршывăн, ведомство ертÿлĕхĕ патне çитни – форумăн паха енĕ», – терĕ Виталий Михайлов, МАДИ республикăри филиалĕн директорĕн çумĕ.

Чăнахах та унпа килĕшмелле пек: хушăран «çÿлтен» хĕсĕнсе тухнă пуçарупа танлаштарсан халăхра тапса тухни лайăхрах та йăл илекен. Çакна шута илес тĕк форумри «çавра сĕтелсенчен» пĕри – «Вĕренÿ тытăмне бюрократилĕхрен хăтарасси» ятпа йĕркеленни – йышăннă резолюцисем паян мар тăк ыран хăйсен «çимĕçне» памаллах. Унсăрăн вĕренÿ учрежденийĕн ертÿçи ĕлĕкхиллех тĕрлĕ документ алă пусса 2-3 сехет ирттерĕ, йышри кашни педагог мĕнле шухăш-ĕмĕтпе пурăнни, мĕнле тĕллев патне ăнтăлни çинчен кăсăкланма кăмăлĕ пулсан та май тупаймĕ.

■ **Ирина ПУШКИНА**



**Татьяна ЕФИМОВА, Вăрнар районĕнчи Калинино вăтам шкулĕн ертÿçи:**

– 34 çул ĕçлетĕп вĕренÿ тытăмĕнче. Мĕн тĕрлĕ улшăну кăна пулмарĕ пуль çак хушăра! 1971 çулта пирĕн шкулта 720 вĕренекен пулнă. Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче – 300 ача. Йышĕ икĕ хут пĕчĕкленнĕ те... – хут çырас ĕç икĕ хут кăна та мар ÿснĕ. Хальхи вăхăтра кашни утăма – вăл пĕлтерĕшлех те мар-и тен – кăтартма тăрăшни сисĕнет. Анчах хут çинче кăтартнипех ĕç тухăçлăхĕ пулсанччĕ! Шкулăн тĕллевĕ, кирек хăш саманара та, ачаран йĕркеллĕ çын çитĕнтересси пулма тивĕç. Этемрен çын тăваканни вара – ĕç. Ĕлĕкрех вĕренекен «иккĕ» илчĕ тĕк учитель çĕрлеччен тенĕ пек çав ачапа ларнă, анчах унăн çав ĕçĕ нимĕнле хут çинче те курăнман. Шел, хальхи вăхăтра кутăнла пулăмсем сăнакалама тивет. Пурнăçра хаклăхсене тĕрĕс курма пăрахрăмăр-ши? Кирек мĕнле педагогăн отчетлăхпа кăна чикĕленесрен сисчĕвленесчĕ.



**Валентина МИХАЙЛОВА, Канаш районĕнчи Карăклă вăтам шкулĕн ертÿçи:**

– Паллах, хут ĕçĕ хальхи вăхăтра пĕртен пĕр вĕренÿ тытăмĕнче анчах мар. Тĕрлĕ инстанцие темĕн тĕрлĕ документ çитерме тивнинче лайăх енĕ те пурах ĕнтĕ: йăлтах куç умĕнче пултăр тесе çапла ыйтаççĕ-ха та... Анчах пĕр содержаниллĕ отчетсенех темиçе çĕре уйрăммăн тăратмалли меллех мар. Çыхăну пулмалла пек ведомствăсен хушшинче. Паянхи кун кашни вĕренÿ учрежденийĕн хăйĕн сайчĕ пур, унта чылай информацие уççăн палăртаççĕ. Мĕншĕн хăш-пĕр цифрăпа факта унтан кăна илсе кăтартас мар?



**Марианна ВАСИЛЬЕВА, Шупашкар районĕнчи Ишек вăтам шкулĕн ертÿçин вĕренÿ енĕпе ĕçлекен çумĕ:**

– Чăнах та, паян вĕренÿ учрежденийĕ çыру ĕçĕпе çирĕм çул каяллахипе танлаштарсан нумайрах аппаланать. Пытарма кирлĕ мар: çакă ачасемпе ирттерес вăхăта «çиет». Çапах та ĕçе хут çинче кăтартса пынин ырă енĕ те пур. Акă, калăпăр, вĕренÿ çулĕ пуçламăшĕнче кашни педагог хăйĕн ĕç программине хатĕрлет. Ун тăрăх йăлтах пĕлме пулать: çулталăк тăршшĕнче унăн мĕнле-мĕнле темăпа уроксем ирттермелле, мĕнле тĕллевсене пурнăçламалла, миçе сехет пĕлÿ памалла т.ыт.те. Эппин, çакă уншăн – çул кăтартмăш пекех. Е тата аттестаци витĕр тухнă чухнехи çăмăллăха асăнам. Çулленхи отчетсене уçатăн та – вĕрентекен 5 çул мĕн ĕçлесе пурăнни йăлтах комисси куçĕ умĕнче. Хут çинче палăртнине-çырнине пуçра тытать çын – ку та аван. Шел, паллах, курăнман ĕç нумаййи вĕрентекенĕн – ачасене, ертÿлĕхĕн – вĕрентекенсене халаллас хаклă минучĕсене туртса илет.

КРИМИНАЛ

# Колони штрафран хăтармасть

***Канаш хĕрарăмĕ, 1973 çулта çуралнă Е., юлашки çулсенче Мускавра пурăннă. Унта хăйĕнчен 5 çул кĕçĕнрех П.-па çывăхланнă. Çак мăшăр наркотик сутса услам тума шут тытнă.***

Вĕсем тĕп хулара марихуана туяннă – 265 грамм ытла. Чăваш Ене килнĕ те çав норкотике, 100 грама яхăн, кунти çынсене сутнă. Клиентсенчен пĕринпе тĕл пулнă чухне хĕрарăма Наркотĕрĕслев управленийĕн сотрудникĕсем тытса чарнă.

Каçхине Е. килне таврăнманнипе сисчĕвленнĕ П. Мускава тарас тенĕ. Сутса пĕтереймен марихуанăна та пăрахса хăварман – пĕрле илнĕ. Анчах пакунлисем ăна шырама тытăннă ĕнтĕ. Арçынна Шупашкарти автовокзалта тытса чарнă.

Тĕп хулари Ленин районĕн сучĕ П.-на – 10, Е.-не 9 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварма, иккĕшне те 20-шер пин тенкĕлĕх штрафлама йышăннă. Мăшăр колонире ĕнтĕ, анчах ку штрафран хăтармасть вĕт. Приговора пурнăçлас тĕллевпе суд приставĕ ФСИН управленийĕн Е. ларакан учрежденине тивĕçлĕ хут ярса панă, уголовлă штрафа унăн шалăвĕнчен тытса юлма ыйтнă. Нумаях пулмасть хĕрарăмăн парăмĕ татăлнă.

Палăртни вырăнлă: суд приставĕ вăл суд йышăнăвне вăхăтра пурнăçламанни пирки те производство пуçарнă. Куншăн хушма тÿлев – 1,4 пин тенкĕ. Ăна та тÿленĕ, çавна май çак кунсенче пристав суд йышăнăвне пурнăçламалли производствăна вĕçленĕ.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

АЙККИНЧИ

# Пĕве урамне çаврăннă Уреткекасси

## Пулăçăшăн, сунарçăшăн, хурт-хăмăрçăшăн кунта – чăн-чăн çăтмах

***Камшăн мĕнле те – эпĕ пĕчĕк ялсене кайсан чунпа канатăп. Унта хуçаланакан лăпкăлăхпа шăплăх тыткăнлать мана. Çут çанталăкпа килĕшӳре пурăнакан çынсен хăйне евĕрлĕхĕ хĕпĕртев кӳрет. Кăмăлĕпе те хитре вĕсем. Кашнин шăпи интереслĕ. Тĕрленчĕк кăна мар, роман та çырма пулать. Çакнашкал тĕл пулусем нумайлăха асра юлаççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Уреткекасси те халĕ те куç умĕнчех. Унта эпĕ юпа уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пулнăччĕ.***



Тĕрĕссипе, вăл ял мар ĕнтĕ, Çатракассин Пĕве урамĕ шутланать. 1964 çулта Уреткекассине /вырăсла Ораткакасы /Оратка/ малашлăхсăр тесе уйрăм ял пек шута хума пăрахнă, Çатракассипе пĕрлештернĕ. Сăмах май, çав çулах Патюшкасси те, Кивĕçурт та /Идельмес/ ялсенчен урамсене çаврăннă. Ăна та Çатракасси ялĕ çумне «çыпăçтарнă». Вĕсене И.С.Дубановăн «Географические названия Чувашской Республики» кĕнекине те кĕртмен. Çатракасси Аксарин ял тăрăхне кĕрет. Çатракассипе Уреткекассине / тĕрĕсрех каласан – Пĕве урамне/ пысăк пĕве уйăрать. Унăн «хӳринче» пĕчĕк, тăпăл-тăпăл кĕпер пур. Вăл – Пĕве урамĕнче пурăнакансемшĕн цивилизаци еннелле хывнă çул. Çатракасси айккинче, пĕве хĕрринче шкул çурчĕ юхăнса ларать. Темиçе çул каяллах хупăннă йывăç çуртăн чӳречисем те çук ĕнтĕ. Салхуллă та тунсăхлă унăн айккипе иртме. Хăй вăхăтĕнче ача-пăча сассипе тулнă ĕнтĕ вăл! Паян вара лупассем çинчи ӳкерчĕксем кăна кунта шăпăрлансем хуçаланнине аса илтереççĕ.

Тĕрлĕ йывăç ытамĕнчи Уреткекасси /эпĕ çаплах çырăп ун пирки/ аякран сап-сарă пĕркенчĕк айĕнчи пекех курăнать. Питĕ илемлĕ! Кĕпер урлă каçнă чухне чарăнмасăр чăтаймарăм: шыв тăп-тăрă, пулăсем ушкăнпа ишсе çӳрени аванах курăнать. Тăвайккирен хăпарсанах Уреткекасси пуçланать. Çурчĕ умĕнче вутă татакан Валерий Иванов мана ăш пиллĕн кĕтсе илчĕ. Килен-каяна чăннипех хавас вĕсем. Валерий Алексеевич пĕлтернĕ тăрăх пĕчĕк ялта 10 кил. Вĕсенчен 3-шĕ – пушă. 4 киле çеç газ кĕртнĕ. Эпир калаçнине кура урама Альбина Калтыновăпа Галина Скворцова та тухрĕç. «Хĕлле хамăр урамран аран тухса çӳретпĕр, çула хырмаççĕ. Çатракассине каçмалли çырмара аванах юр лартать. Ĕлĕкрех шкул ачисем сукмак хыватчĕç. Халĕ ялĕпе те /вĕсем урам мар, ĕлĕкхиллех ял теççĕ. Авт./ пĕр шăпăрлан кăна пĕлӳ çуртне çӳрет»,– хăйсене пăшăрхантаракан ыйтуран пуçларĕç вĕсем калаçăва.



Çатракассине каймалла, çавăнпа чирлемелле мар тетпĕр-ха»,– хăйсем çирĕп хавалла пулнине пытармарĕç Альбина Ананьевнăпа Галина Ивановна. Вĕсем каласа панă тăрăх – çак тăрăхри ялсем ытларах тутар ячĕсенчен пулнă. Уреткекассине те Уретке /е Уритке/ ятлă çын пуçарса янă-мĕн. Е унăн ячĕ Уркке шывпа та çыхăнма пултарнă. Вăл мĕн йĕркеленнĕренпех пысăк ял пулман. Пӳрт йышĕ кунта 18-тан иртмен. 1860 çул тĕлне кунта 13 хуçалăх кăна юлнă. Ялта Емельян Тимофеевич Скворцовăн çил арманĕ пулнă. Ял пуçĕнче маларах тепĕр 6 кил пулнă иккен. Вĕсен вырăнĕнче халĕ вăй-хала çирĕплетмелли турниксемпе сирень тĕммисем кăна юлнă. Уреткекассисем пĕлтернĕ тăрăх – ку тăрăхри ялсене Çĕнĕ Шупашкартан амăш капиталне илнĕ хĕрарăмсем тăтăш çурт туянас тесе килеççĕ. Кайран вара вĕсенче шăв-шав, ĕçкĕ-çикĕ

Эпир те чавса пăхрăмăр – тем май килмерĕ-ха. Улах вырăн кунта. Ытлашши шăв-шав çук. Çулла та ачасем каникула хуларан питех килмеççĕ. Çимĕкре кăна урам хушши тулать»,– паллаштарать 51 çулти Валерий Иванов.

– Каçарăр, паллах, ыйтнăшăн. Анчах вăл та пурнăç йĕрки, пĕчĕк ялта çын вилсен шăтăк чавма çын епле пухатăр?– интереслентĕм эпĕ.

– Усал хыпар утпа çӳрет теççĕ. Кӳршĕ ялсенчен те 30-40 çын пухăнать. Халăх пĕрпĕринпе туслă пурăнать кунта. Хăнасене чейпе сăйламасăр нихăçан та кăларса ямастпăр. Уреткекассисен мăнаçланмалли те пур: ял варринче икĕ кедр йывăççи ситĕнет. Вĕсем пĕлтĕр пуçласа мăйăрпа савăнтарнă. Чи вавă арçын, 8 теçеткене хыçа хăварнă Николай Самарин паянхи кунччених ял çыннисене тĕлĕнтерме пăрахмасть. Вăл халĕ те кӳршĕ яла çăкăр туянма мотоциклпа çӳрет.

Ивановсем паян çут çанталăк газĕ кĕртес ĕмĕтпе пурăнаççĕ. Ĕне, пушмак пăру, сурăх усраççĕ. «Кĕтӳ ĕлĕк çырмара кăна çӳретчĕ, халĕ уйрах çитереççĕ. Тепĕр чухне пахча хыçнех килеççĕ. Пахчана тракторпа сухалаттаратпăр. Уншăн 500 тенкĕ илеççĕ. Çĕр улмине /33 соткăна/ алăпах лартатпăр. Хамăра валли те,



> УРЕТКЕКАССИСЕМ ПĔЛТЕРНĔ ТĂРĂХ – КУ ТĂРĂХРИ ЯЛСЕНЕ ÇĔНĔ ШУПАШКАРТАН АМĂШ КАПИТАЛНЕ ИЛНĔ ХĔРАРĂМСЕМ ТĂТĂШ ÇУРТ ТУЯНАС ТЕСЕ КИЛЕÇÇĔ. КАЙРАН ВАРА ВĔСЕНЧЕ ШĂВ-ШАВ, ĔÇКĔ-ÇИКĔ ХУÇАЛАНАТЬ

хуçаланать. Телее, кунта унашкаллисем «йăва çавăрайман-ха».

«Ялта пĕтĕмпе те 3 ĕне кăна. Вĕсене кӳршĕ ял кĕтĕвне яратпăр. Вырăнти хуçалăх тахçанах саланнă. Çĕрсене сухаламаççĕ, çавăнпа кунта выльăх усрама ирĕк. Хăш-пĕри пĕчĕк ялта пурăнма тунсăхлă тесе шухăшлать пулĕ-ха. Кичем мар, манăн кирек епле пулсан та хулара пурăнас килмест. Кунта

Хĕрарăмсем каланă тăрăх – паян кунта ытларах пенсионерсем пурăнаççĕ. Пĕр мăшăр кăна – Надежда Алексеевнăпа Валерий Алексеевич Ивановсем – куллен ĕçе çӳрет. «Уреткекассинче пирĕн лавкка та, медпункт та çук. Мĕн пур ыйтупа кăштăртатма хăнăхнă та – хулара кун кунласа çĕр çĕрлеме чăтăм çитес çук. Паллах, хĕлле тухса çӳреме начартарах ĕнтĕ. Шыв ăсма çырмана, çăл куçа çӳретпĕр. Хĕлле сукмак палли пултăр тесе маяксем лартатпăр. 3 килте çăлтан шыв ăсаççĕ.

ачасене парса ямалăх та çитет. Вутă хатĕрлеме вăрмана каятпăр. Хĕл каçма 2 прицеп вутă çитет. Паян эпир кăмпапа пуян. Халĕ вăл уйра çавапа çулмалăхах ӳсет. Ара хирте тыр-пул çитĕнтерместпĕр вĕт», – пытармарĕ Валерий Алексеевич.

Ял /хут çинче урам ĕнтĕ/ пуласлăхĕ пирки сăмах пуçарсан: «Манăн ĕмĕре çитет»,– терĕ. Хушса мĕнех калам-ши? Пурнăça пĕлме çук, паян – апла, ыран урăхларах вăл. Кам пĕлет, тен, йĕркеллĕ çынсемех пурăнма килес тейĕç Çатракассин Пĕве урамне? Вырăнĕ, питĕ илемлĕ кунта! Сунарçăсемшĕн, пулăçсемшĕн, утарçăсемшĕн, çут çанталăка юратакансемшĕн чăн-чăн çăтмах.

**Роза ВЛАСОВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем

ÇУЛ ÇӲРЕВ

Александр ЯКОВЛЕВ:

# «Халĕччен курман кайăксене ӳкерсе илтĕм»

***Шупашкар районĕнчи Çĕньялти Александр Яковлев орнитолог иртнĕ çулла федерацин Зея патшалăх заповедникĕнче /Амур облаçĕнчи Зея хулинчен инçе мар/ пулнă, халĕччен курманнине нумай пĕлнĕ.***

**– Эсĕ «Чăваш вăрманĕ» наци паркĕнче 5 çул вăй хутăн, директор çумĕ пултăн. Унтан федерацин «Сăрçи» патшалăх заповедникĕн экологие саракан пайĕн сотрудникне куçрăн. Кăçалхи çулла Инçет хĕвел тухăçне çитсе килтĕн.**

– Зея заповедникĕн ертӳçи ĕçлеме чĕнсе çыру ячĕ, – терĕ Александр Алексеевич. – Йыхрава хапăлласах йышăнтăм. Унти пуян çут çанталăка тишкерсе пĕлĕве ӳстерес килчĕ. Заповеднике никĕсленĕренпе 50 çула яхăн пулин те вĕçен кайăккĕшĕк тĕрлĕлĕхне тĕплĕн палăртман. Мана çак ĕçе пурнăçлама хушрĕç.

**– Зея заповеднике çĕршывăн хăш кĕтесĕнче?**

– Амур облаçĕн çурçĕр пайĕнче, сăртлăтуллă Тукурингрăн ту хырçинче /230 çухрăма тăсăлать/. Вăл çĕр пин гектар йышăнать. Унăн талккăшĕпех – вăрман, тинĕсрен 500-1400 метра çĕкленекен сăртту, вĕсен хушшипе тăсăлакан каньон евĕр юхан шывсем.

**– Тĕллевне пурнăçларăн-и?**

– Паллах. Заповедникре чĕп кăларакан вĕçен кайăксен 110 тĕсне шута илтĕм. Вĕсемсĕр пуçне çуркунне-кĕркунне облаç урлă 140-170 тĕс иртет. Заповедникре чарăнса апатланать. Пĕтĕмпе 250-280 тĕс.

**– Пирĕн республикăри пекех-иç.**

– Çапла. 20-30-шĕ Чăваш Енре те йăх тăсать. Хĕвел тухăçĕнче пуличчен хам куçпа курманнине 30 яхăн палăртрăм.

**– Пĕр-пĕринчен мĕнле уйăртăн, вăл е ку кайăк пулнине епле çирĕплетрĕн?**

– Пĕр пайне – сассинчен, теприне – кӳлепинчен, тĕсĕнчен. Ĕçре фотоаппаратпа, бинокльпа усă куртăм. Хам пĕлменнисене справочникра тупрăм, орнитологсемпе тĕпчерĕмĕр. Унччен пĕрре пăхсах е юррине итлесе тӳрех палланисемпе чăрмав пулмарĕ.

**– Хăвăра тĕлĕнтернисемпе паллаштармăн-и?**

– Пирваях куç умне дикуша тухса тăчĕ. Вăл Чăваш Енре пурăнмасть. Амур облаçĕнче, Сахалинра çеç тĕл пулать. Тинĕсрен 1600 метр тата çакăнтан çӳллĕрех тусем çинчи чăрăш, лиçвак, шур чăрăш çитĕнекен вăрманта чĕп кăларать. Сăнĕпе хура пăчăра аса илтерет, ăсан ушкăнне кĕрет. 380-780 грамм таять. Çунатти – 17,5-20 сантиметр. Çынран пач хăрамасть. Чăтлăх-вĕтлĕхре çынна курсан вĕçсе пырса пуçĕ çине ларма хăтланать, алăсемпе сулкаласан турат çине вĕçсе ларать те çынна куçĕсемпе чарлаттарса сăнать. Хĕлле лиçвак, чăрăш турачĕн симĕс йĕппнсемпе, çулла вĕт хурт-кăпшанкăпа, çырлапа тăранать. Дикуша Раççейре кăна пурăнать.

**– Тата мĕн курса савăнтăн?**

– Федерацин Амур облаçĕнчи Хинган патшалăх заповедникне те çитрĕм. Вольерсенче Япони тăрнисемпе хура тăрнасене ĕрчетеççĕ. Сотрудниксем чĕпсене çитĕнтерсе çуллен ирĕке яраççĕ. Эпĕ 6-7 чĕпĕ кăларса яма хатĕрленине куртăм. Ĕç федераци программипе килĕшӳллĕн пулса пырать. Ăна пурнăçлама Раççей хыснинчен укçа уйăраççĕ.

**– Республикăра чĕрлĕхе ĕрчетме унтан кĕмĕл куçараççĕ-ши?**

– Пирĕн ун пек программа пуррине пĕлместĕп.

**– Чăваш Енре пĕтес патне çитнĕ тĕссем çук-им?**

– Пайтах. Республикăн Хĕрлĕ кĕнекине чĕр чун тĕнчин 290 объектне кĕртнĕ. Вĕсем çитес çулсенче Чăваш Ен хутлăхĕнче пачах çухалма пултараççĕ. Сăмахран, темиçе караппăл /беркут/ çемйи çеç чĕп кăларать. Республикăн Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службин кăçалхи кăрлачнарăс уйăхĕсенче 7 çӳлевĕçе çеç шута илнĕ. Темиçе çеç юлнисене йышлăлатас тĕлĕшпе чĕп-çăвăра читлĕхре çитĕнтерсе ирĕке ярас ĕçе йĕркелемелле. Çĕршывра вольерта ӳстерсе çут çанталăка тавăрнă тĕслĕх нумай. Эпĕ федерацин Бурят Республикинчи Баргузин патшалăх заповедникĕнче /ăна 1916 çулта йĕркеленĕ/ кăша /соболь/ хунама пулăшнине пĕлетĕп.

**– Икĕ уйăха тăсăлнă çул çӳрев хăвна усă пачĕ-и?**

– Паллах. Кун пирки пĕр самант та иккĕленместĕп. Инçетри заповедниксен ĕç-хĕлĕпе, ăслăлăхри опычĕпе, нумай çĕнĕлĕхпе, тĕпчевçĕсемпе, вăл шутра Хинган заповедникĕнче ĕçлесе пурăнакан икĕ чăвашпа паллашрăм.

**Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă**



*• Александр Яковлев тăрнасемпе.*

ТУСЛĂХ КĔПЕРĔ

# Тепре тĕл пуличчен!

***Калмăк Республикин Б.Басангов ячĕллĕ Наци драма театрĕн Чăваш Енри гастролĕсем вĕçленчĕç. Хĕвеллĕ калмăк çĕрĕн артисчĕсем пилĕк кун хушши Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта, Канашра тата Çĕмĕрлере хăйсен чи лайăх ĕçĕсене – «Сказка Белого Месяца», «Араш», «Сердце матери» спектакльсене – кăтартрĕç.***

«Сказка Белого Месяца» юмахри ĕçсем Çуркуннен пĕрремĕш кунĕнче, халăхăн çулленхи Цаган Сар /шурă уйăх/ уявĕнче – пулса иртеççĕ. Тĕп сăнар – юратнă ĕнине шырама тухнă арçын ача. Шырав уншăн чăн-чăн тĕлĕнтермĕш пулса тăрать: çул çинче вăл юмахри сăнарсене тĕл пулать, Цаган Сар уявĕнче халăх юрри-ташшипе киленет, ярмăркка ăмăртăвĕсене курса тĕлĕнет.

Çак ĕç-хĕле куракансем те хутшăнаççĕ. Вĕсем калмăкла шутлама вĕренеççĕ, чĕр чунсемпе кайăксен чăвашла тата калмăкла ячĕсене танлаштараççĕ. Çакăн евĕр хушма ĕçхĕле Борис Манджиев режиссер спектакле ятарласа кĕртнĕ. «Питĕ кăткăс япала вăл, çав вăхăтрах хăйне тӳрре кăлараканскер. Ачасен ют чĕлхене те илтмелле, унăн кĕвĕлĕхне, илемне туйса илмелле, ăна тăван чĕлхепе танлаштармалла. Аслисем валли лартнă спектакльсенче юрату, кĕлĕ сăмахĕсем наци чĕлхипе янăраççĕ. Вĕсене кирек хăш халăх çынни те аван ăнланать. Çапла майпа спектакль хăйне евĕрлĕхпе пуянланать», – палăртать Борис Наминович.



Алексей Балакаев пьесипе лартнă «Экин зуркн» /«Сердце матери»/ спектакль те чăваш куракание килĕшрĕ. Юмах-халапра вăй илнĕ ĕçхĕл паян кун та пĕлтерĕшне çухатман. Кăсăклă сценографи, актерсен ăсталăхĕ куракана аваллăха çавăрса кĕрет, сăнарсен савăнăçĕпе инкекне чĕре патне илсе пырать.

Калмăк Республикин артисчĕсем Çамрăксен театрĕн сцени çинче пултарулăхĕпе паллаштарни икĕ халăхшăн та пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăм. Туслă çыхăну малашне те çирĕпленсе пырассине палăртрĕç театрсен ертӳçисем. ЧР культура министрĕн пĕрремĕш çумĕ Альбина Алексеева Калмăк театрĕн тĕп директорне тата артисчĕсене Культура министерствин Тав хучĕсемпе чысларĕ. Çамрăксен театрĕн директорĕ Елена Николаева тăванла республикăн сцена ăстисене каçхи Шупашкара сăнланă картина парнелерĕ, малашнехи ĕçре ăнăçу сунчĕ. Çавăн пекех вăл чăваш тата калмăк театрĕсем пĕр-пĕрин патĕнче гастрольсене ирттерни икĕ еншĕн те усăллă, тухăçлă пулнине çирĕплетрĕ.



**И.СЕРГЕЕВА**

ХĂТЛĂ ÇУРТ-ЙĔР

# Çемьесене савăнтарчĕç

***«Чăваш Республикин территорийĕнчи пурăнма юрăхсăр çуртсенчен куçарасси» программа ĕçлеме пуçланăранпа чылай çемье хăтлă хваттер илчĕ. Патшалăх пулăшăвне çак кунсенче Элĕк салинче пурăнакансем те туйса илчĕç. Колхоз урамĕнчи виçĕ хутлă вĕр çĕнĕ çурт 24 çемьене йышăнчĕ. Вăл 943,5 тăваткал метрлă. Программăна пурнăçлама района 2013-2014 çулсенче хыснаран 23,5 млн тенкĕ, вăл шутран пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлакан фондран – 15,1 млн, республика бюджетĕнчен 8,4 млн тенкĕ уйăрнă.***

Çĕнĕ хваттер хуçисене ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Анатолий Кузьмин, Элĕк район пуçлăхĕ Вячеслав Дубинин, район администрацийĕн пуçлăхĕ Александр Куликов, Элĕк ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Александр Ефремов, строительство организацийĕн директорĕ Сергей Лаврентьев саламларĕç. Анатолий Иванович республикăра адреслă программа ăнăçлă пурнăça кĕни çинче чарăнса тăчĕ. «Граждансене кивĕ çуртсенчен куçарас программăна килес çул вĕçлеме палăртатпăр. Иккĕмĕш тапхăрĕнче тата 55 хваттерти 133 çынна куçармалла», – терĕ Александр Николаевич. Пурăнмалли вырăн хуçисене çурт умне тирпей-илем кĕртес ĕçе хастар хутшăнма чĕнсе каларĕ.



Кил хуçисем хăйсен хваттерĕсене кĕчĕç. Вĕсем паянхи пурнăç ыйтăвне туллин тивĕçтереççĕ: ăшă тата сивĕ шыв пур, каяш çуртран юхса тухать, кашнин хутса ăшăтмалли хатĕр, стенасене çыпăçтарнă, урайне сарнă. Хваттерсене хăтлăлатнă чух çынсен кăмăлне шута илнĕ. Владимир Артемьев пурин ячĕпе те республика тата район ертӳçисене, строительсене пурăнмалли вырăнлă пулнисен нушине ăнланнăшăн, хăйсене пулăшнăшăн тав турĕ.

Строительсем чи пĕчĕккисем çинчен те манман. Вĕсем валли выляв лаптăкĕ уйăрнă. Вăл нихăçан та пушă пулмасса шанаççĕ. Аслисем хăнасемпе калаçнă хушăра шăпăрлансем çĕнĕ вырăна тĕрĕслесе пăхрĕç.

**Марина ЛЕОНТЬЕВА**

КИЛТИ ХУҪАЛĂХ

ЫЙТУ-ХУРАВ

### Йăха тăсма хăшне суйламалла?

**Хăшĕсем йĕкĕреш тынасене ĕне тума хăвармалла мар теççĕ, теприсем ку шухăш тĕрĕс мар тесе ҫирĕплетеççĕ. Мĕн тумалла-ха?**

**Г.ВАСИЛЬЕВА.**
Етĕрне районĕ.

Вăкăрпа йĕкĕреш ҫуралнă тынана хăвармаççĕ. Икĕ пăрăвĕ те тына пулсан ним хăрамасăрах йăха тăсмашкăн хăварма юрать.

ХĔЛ ХЫРĂМĔ АСЛĂ

### Йӳҫĕтнĕ пан улми

Пан улмине /«антоновка» сорт лайăххах/ суйламалла, ҫумалла. Катка /е пысăк кастрюль/ тĕпне хура хурлăхан е чие ҫулҫи хумалла. Ҫулҫă ҫине – темиҫе рет пан улми. Каткана ҫапла майпа тултармалла. Ҫиелти сийĕ ҫулҫă пултăр. Каткана ятарласа хатĕрленĕ ăсла е пылак шыв ямалла.

Ăсла валли ыраш ҫăнăхне вĕренĕ шывпа /питĕ вĕри кирлĕ мар/ хутăштармалла, пăтратмалла, 1-2 сехетрен сăрăхтармалла. 10 литр шыва 200 грамм ыраш ҫăнăхĕ тата 2 апат кашăкĕ тăвар ямалла. Пылак шыв валли 10 литр шыва 400 грамм сахăрпа /е 600 грамм пылпа/, 3 апат кашăкĕ тăварпа хутăштармалла, вĕретсе сивĕтмелле.

Пан улми савăтне сивĕ вырăна лартмалла, ăсла е пылак шыв ямалла. Пан улмине ҫаврака ывăспа хупламалла, ун ҫине йывăр япала /лайăх ҫунă йывăр чул/ хумалла.

3-4 кун иртсен савăта ăсла е пылак шыв тата хушмалла. Шĕвек ывăс шайĕнчен 3-4 сантиметр ҫӳлерех пултăр. Йӳҫĕтнĕ пан улмине 30-40 кунран ҫиме юрать.

### Усăллă канашсем

● Техĕмлĕхсене яшкана пиҫиччен 3-7 минут маларах ямалла;

● шӳрпе тутлă та ырă шăршăллă пултăр тесен ăна вăйсăр ҫулăм ҫинче пĕҫереççĕ;

● чăх ашĕнчен яшка пĕҫернĕ чухне тĕрлĕ техĕмлĕх нумай яма юрамасть – аш тутине хупласа хурĕ;

● пысăк татăксемпе пĕҫернĕ какай пĕчĕк татăксемпе танлаштарсан техĕмлĕрех;

● яшкана яриччен какая ăшаласа илсен аш шӳрпи чылай тутлăрах пулĕ;

● кăмпа яшки пĕҫерме пуҫласан пахча ҫимĕҫе ӳсен-тăран ҫăвĕнче ăшаламалла, сĕтрен пĕҫерсен пахча ҫимĕҫе услам ҫупа пăшăхлаççĕ;

●шӳрпе пĕҫернĕ чухне кăпăкне пухма ĕлкĕрейменнĕр-и? Сивĕ шыв кăштах хушсан вăл ҫиеле хăпарĕ;

● яшка темиҫе хут вĕрилентернине «юратмасть», эппин, ăна пĕр хут кăна ҫимелĕх пĕҫерсен лайăххах;

● пулă яшкине пĕҫерме тытăнсанах тăвар яраççĕ, аш шӳрпине – пиҫиччен ҫур сехет маларах, кăмпа яшкине – пиҫеспе ҫеҫ.

ĔМĔР ПĔРЛЕ ПУРĂНАР

### Хăнасене кĕтсе илме пĕлетпĕр-и?

Тус-тăванпа, пĕлĕш-хурăнташпа хăш-пĕр чухне те пулин пĕрле пуҫтарăннинчен, чуна уҫса калаҫнинчен лайăххахи мĕн пур-ши? Хăнасене еплерех кĕтсе илмелли ҫинчен калаҫар-ха эппин.

Хаклă ҫынсене хуҫапа кил хуҫи хĕрарăмĕ е вĕсенчен пĕри кĕтсе илеççĕ. Хăнасене кĕтнĕ май хăвăр еплерех тăхăнасси, хваттере мĕнлерех илемлĕ тирпейлесси ҫинчен малтанах шухăшласа палăртмалла.

Чĕннĕ ҫынсен кам-кам пĕрле пухăнасса пурин те пĕлмелле. Пĕр-пĕрне килĕштерменнисем те пулма пултараççĕ-ҫке-ха.

Ҫуралнă кунсене, юбилейсене ытларах чухне каҫхине паллă тăваççĕ. Кофе ĕҫсе калаҫса ларма кăнтăрла лайăх.

Тĕрлĕ ӳсĕмри, пĕр-пĕрне палламан, пурнăҫ ҫине тĕрлĕрен пăхакан ҫынсене хăнана пĕрле чĕнме кирлĕ мар – пĕр чĕлхе тупаймĕҫ.

Кил хуҫисен пуринпе те пĕрешкел тимлĕ пулмалла. «Питĕ тутлă», – тесе мухтанă хыҫҫăн ҫакă сире мĕн хака ларни, апат-ҫимĕҫе ăҫта туянни пирки пакăлтатма кирлĕ мар. 2-3 хăна ҫеҫ пĕлекенни ҫинчен калаҫма юрамасть – ыттисене ҫак вăхăтра кичем пулĕ. Хăвăрăн ыйтусемпе те никама та канăҫсăрлантарас ҫук, тава кĕни те килĕшӳсĕр.

ТĔПЕЛТЕ ЧУХНЕ

### Кăмпа солянки

***Ку вăл яшка мар, апатсен хушшинче ҫырткаламалли, ăна хĕл валли кĕленче савăтсене тултарса нӳхрепре упраççĕ.***

Нумайăшĕ кăмпана шăнтмăшра /морозильникре/ упрама хăнăхрĕ. Капла унăн ырă шăрши те, тути те ҫухалмаççĕ. Кирек хăш вăхăтра та хатĕрлемешкĕн алă айĕнчех.

Ҫапла вара ҫуса тасатнă кăмпана /ăвăс кăмпи, шур кăмпа, хурăн кăмпи лайăххах/ пĕҫермелле, тепĕр хут ҫумалла. Ăна каллех шыва ямалла /шывĕ нумаях кирлĕ мар/, вĕреме кĕриччен ҫулăм ҫинче тытмалла. Улăм пĕрчи пек туранă суханпа кишĕр хушмалла. Кăмпапа пахча ҫимĕҫе 20 минут пăшăхламалла. Вĕтĕ туранă купăста /кăмпаран ытларах кирлĕ/ хушмалла. Купăстана кăштах вăхăт ҫулăм ҫинче тытсан тутине кура сахăр песукĕ, тăвар, пĕрчĕллĕ пăрăҫ, тикĕт куракĕ /гвоздика/ хушмалла. Ӳсен-тăран ҫăвĕ ямалла.

Пурне те пĕрле тата 20 минут пăшăхламалла, вĕҫĕнче уксус хушмалла. 2 литр ҫурă солянкăна ҫуршар стакан ӳсен-тăран ҫăвĕ тата 9%-лă уксус хушмалла.

Солянкăна вĕриленĕ ҫур литрлă кĕленче савăтсене тултармалла, хупмалла.

**Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.**

ДИНАСТИ ТĂСĂМĔ

# Историне юратасси «иккĕрен» пуҫланнă

## Кӳренмен. Лайăх вĕреннĕ те учитель пулса тăнă

***Ун чухне Александр Тимофеев Вырăскас Пикших вăтам шкулĕнче 5-мĕш класра вĕреннĕ. Вĕренӳ ҫулĕн пуҫламăшĕнче ҫĕнĕ темиҫе предмет хушăннă. Вĕсенчен пĕри – истори. Ăна З.Кочеткова вĕрентнĕ. Темиҫе урок ирттерсен мĕн вĕреннине пуҫра ҫирĕплетес тĕллевпе Зоя Исаевна тĕрĕслев ĕҫĕ ирттернĕ. Хăйĕн тетрадьне уҫсан Сашăн куҫĕ-пуҫĕ алчăраса кайнă. Ун ҫине хĕрлĕ кăранташпа ҫырнă пысăк «иккĕ» йĕкĕлтесе тăрăхланă евĕр мăн кăмăллăн «пăхса ларнă».***



– Кӳреннине ăшра ирттерсе ятăм. Ҫав кунтан пуҫласа истори урокĕсене тĕплĕн хатĕрленме пуҫларăм. Часах вăл эпĕ кăмăллакан предметсенчен пĕри пулса тăчĕ. Зоя Исаевна вара юратнă вĕрентекенсен йышне кĕчĕ, – терĕ Сиккасси вăтам шкулĕн ҫамрăк специалисчĕ А.Тимофеев.

Халĕ, паллах, вăл Саша мар. Ĕҫтешĕсем те, ачасем те ăна ашшĕ ячĕпе чĕнеççĕ: Александр Валерьевич. Вырăскас Пикших шкулĕнчен лайăх паллăсемпе вĕренсе тухсан вăл пилĕк ҫул хăйĕн пĕлĕвне патшалăхăн Мускаври уҫă университечĕн Шупашкарти филиалĕнче ӳстерет. Экономист-менеджер дипломне илнĕ Александрăн салтака кайма ят тухать. Тăван ҫĕр-шыв умĕнчи тивĕҫе вăл сывлăш-космос оборонин ҫарĕсен Плесецкри космодромĕнче ирттерет.

– Пĕррехинче чаҫе тĕрĕслесе кĕртмелли пункта наряда кайсан ĕҫе каякан арҫынсен ушкăнĕ иртсе пынă чухне чăвашла сăмахсем илтĕнчĕҫ. Темшĕн-ҫке ҫав арҫынсем мана ҫывăх тăвансем евĕр туйăнса кайрĕҫ. Тăван чĕлхе епле ҫепĕҫ те илемлĕ пулнине чунăмпа туйса илтĕм. Вăл мĕнле хаклă та ҫывăх иккен, уйрăмах – тăван килтен аякра чухне. Чăтаймарăм, вышкайсăр хăпартланса: «Салам, ентешсем!» – тесе кăшкăртăм. Ҫапла паллашрăм эпĕ Улатăр районĕнчи Эйпеҫ тăрăхĕн ҫыннисемпе. Шывпа сапса уйăрми туссем пулса тăтăмăр. Час-час килетчĕҫ вĕсем ман пата. Пушă алăпа мар, яланах кучченеҫ парса хăваратчĕҫ. Пĕррехинче Эйпеҫ тăрăхĕнчен таврăннă чухне ҫула май атте-анне патне кĕрсе тухса ҫимелли-сем илсе килнĕччĕ. Маншăн тата ҫарти туссемшĕн чăннипех те пысăк уяв пулнăччĕ, – аса илчĕ Александр.

**ТĂВАН ЧĔЛХЕ ЕПЛЕ ҪЕПĔҪ ТЕ ИЛЕМЛĔ ПУЛНИНЕ ЧУНĂМПА ТУЙСА ИЛТĔМ. ВĂЛ МĔНЛЕ ХАКЛĂ ТА ҪЫВĂХ ИККЕН, УЙРĂМАХ – ТĂВАН КИЛТЕН АЯКРА ЧУХНЕ**

А.Тимофеевăн ашшĕ-амăшĕ – педагогсем: Валерий Геннадьевич – Вырăскас Пикших вăтам шкул директорĕн вĕренӳпе воспитани енĕпе ĕҫлекен ҫумĕ, Рэмма Васильевна биологи, экологи тата географи вĕрентет. Александрăн кукашшĕ В.Бородкин Патăрьел районĕнчи педагогика ĕҫĕпе чапа тухнă ҫынсенчен пĕри пулнă, Чăваш Республикин тава тивĕҫлĕ вĕрентекенĕ. А.Тимофеев унăн мăнукĕ пулнишĕн ҫав тери мăнаҫланать. Василий Михайлович ачасене спортпа туслаштарнă. Унăн воспитанникĕсен хушшинче республикăра, ҫĕр-шывра, тĕнче ăмăртăвĕсенче пысăк ҫитĕнӳсем тунисем сахал мар. Хăйсен юратнă вĕрентекенне юбилей ячĕпе вĕсем ҫăмăл машина парнеленĕ. Номерне 060 ларттарнă. Ун ячĕпе Пăла тăрăхĕнче ăмăртусем, турнирсем иттереççĕ.

– Кукаҫи, атте-анне ĕҫне хисепе хурса, вĕсен ĕҫне малалла тăсас тĕллевпе вĕрентекен профессине суйласа илтĕм. Ҫартан таврăнсан И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн истори факультетне куҫăн мар майпа вĕренме кĕтĕм. Ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулĕ пуҫлансан А.И.Миттов ячĕллĕ Сиккасси вăтам шкулĕнче историпе общество пĕлĕвĕн предмечĕсене вĕрентме тытăнтăм. Шкул директорĕ М.Михайлова, педагогсен коллективĕ ăшшăн йышăнчĕҫ. Хама пĕртте ют ҫын пек туймастăп, – калаҫу ҫăмхине малалла тăсрĕ ҫамрăк.

А.Тимофеева 7-мĕш класс шанса панă. Сăмахшăн кивҫене кайманскер ачасемпе, пĕрле ĕҫлекен аслă юлташĕсемпе пĕр чĕлхе хăвăртах тупнă.

Александр ҫу кунĕсенчен пĕринче Вăрмар районĕнчи Энĕшпуҫ ялĕн хĕрĕпе пĕрлешрĕ. Мария Хусанти ветеринари институтĕнче юлашки курсра вĕренет.

– Мана ялта пурăнма килĕшет, Маша вара ытларах хула пурнăҫне кăмăллать. Шкула ĕҫлеме вырнаҫсан икĕ хутлă ҫуртра хваттер пачĕҫ. Кунта вара условисем хуларинчен кая мар. Иксĕмĕр те кăмăллă. Пĕрлехи пурнăҫ ҫулне кунтанах пуҫлас терĕмĕр, – вĕҫлерĕ Александр Валерьевич.

Ҫамрăксене пĕр-пĕрне ăнланса, хисеплесе пурнăҫ сукмакне такăрлатса пыма вăй-хал сунатпăр.

**В.АЧЧА.**
Канаш районĕ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ

АСА ИЛӲ

# Чăн-чăн участковăйччĕ

## Ăна Михаил Киселев генерал та ырланă

***1990-1994 ҫулсенче пирĕн Чăнкасси тăрăхне милици капитанне А.Максимова участокри инспектор пулма ҫирĕплетнĕччĕ. Ун йышши йĕрке хуралҫисене эпир унччен те, паян та урăх никама та тĕл пулман. Ҫавăнпах-ши – служба енĕпе вăл тунă ĕҫсем паянччченех ял ҫыннисен асĕнче. Пурте ăна ăшшăн аса илеççĕ. Тĕрмере пулса курнисем те ăна чупса пырсах алă пама паян та хатĕрри курăнать.***

Преступлени тунине пĕтерме пултарнипе Максимовăн райцентртан инҫетри участокĕ 1-мĕш вырăна тухнăччĕ. Кун пирки пирĕн участковăя республикăри йĕркелĕх хуралҫисен слетĕнче ШĔМ министрĕ Михаил Киселев генерал та ырланă. Пысăк пуҫлăхсем яла килсех ĕҫĕпе тĕлĕннĕччĕ.

Ялсенче пушарсенчен сыхланма хурал йĕркеленĕччĕ. Ку енĕпе брошюра та пичетленĕччĕ. Чăнкасси тăрăхĕнче Максимов опытне сарма канашлу та иртнĕччĕ. Чăваш телекуравĕ те дозорсем ҫинчен передача килсе ӳкернĕ /В.Тимуков режиссер/. Вăлах ялти талăклăх хурал валли шăхлич, кĕсье хунарĕсем илсе панăччĕ. Хул ҫине ҫыхма «Дозор-хурал» тесе ҫырнă хĕрлĕ хăюсем ҫĕлеттерни те асра. Ирхине 8 сехетре сменăна ыттисене пама Чăнкасси ял Канашне пухăннă хуралҫăсем. Ытти ялтан – Кушмартан, Шупашкар Сĕмĕлтен, Шанар-Куснартан – телефонпа ял Канашĕн ертӳҫине е участокрине хурал служби мĕнле иртни ҫинчен пĕлтернĕ.

Участковăй та участокрах пурăннă. Паянхилле мар – «пушар тухсан», мĕн те пулин сиксе тухсан районтан хăпса ҫитеççĕ вуннăн. Унччен вырăнти пакунлине ҫулталăк курмаççĕ, палламаççĕ те. Мĕншĕн тесен уйăхсерен вăлах отчетсем туса панă, вĕсене хуҫалăх ертӳҫисем те, ял Канашĕн представителĕсем те хутшăннă. График-пĕлтерӳсĕрех пухăннă халăх, ара, пĕлнĕ: Чăнкассинче уйăхăн пĕрремĕш кунĕнче, ыттисенче малалла... Кантуртах, ял Канашĕнчех пурăннă участковăй. Ҫĕрле те ăна тупма пултарнă.

Алăк ҫинче, ял Канашĕнче «Максимов кантурта!» е «Участковăй ял Канашĕнче!» «Гаражра», «Пушарнăйра!» тесе ҫырнă хутсем хĕсĕнсе тăнă. Кашни ялтах ҫĕрлесенче кĕрсе тухма шанчăклисем пулнă, вĕсене пурте пĕлсе тăнă.

Совхозри наян-ĕҫкĕҫ-хулигансене вырăнти радио урлă директор питĕ тустарнă. Ун хыҫҫăн микрофона участковăй илнĕ. Тĕрлĕ йăх-яха уҫҫăн намăслантарма хăраман вăл. Ку питĕ усăллă. Ҫавăнпа «радиона лекесрен» лешсем питĕ шикленнĕ, вăтанса намăсланнă. Радиоузела пĕтерме те хăтланса пăхнă, анчах унти пĕр хутĕнче участковăй, 2-мĕшĕнче совхоз директорĕ Юрий Николаев, ЧАССР ял хуҫалăхĕн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ, пурăннă ҫав. Райхаҫатри статьясенчен те йăх-яхсемех питĕ хăранă. Ара, унта сăмакунҫăсем ҫинчен, арăмĕн пит-куҫне кăвакартнисене сăнланă фельетонсем пичетленнĕ. Хаҫатăн хастар ялкорне хурламах Г.Яковлев редактор патне те делегаци ҫитнĕ – ҫăхавпа, «Пичетлемелле мар!» тесе. Ăна кукăр алăллисен, сăмакунҫă-ĕҫкĕҫ ушкăнĕ пуҫарса пăхнă, анчах...

«Дозорсем» уй хапхине хупсах тăнă. Ют транспорт ҫĕрле кĕнисене ҫырса пынă. Ҫакă преступленисен шутне самаях чакарнă. Талăклăх хуралтисене лавккасенче черетсĕр ҫăкăр сутассине, хастаррисене пухусенче Хисеп хучĕсемпе, укҫан премипе хавхалантарнă. Пĕрлех Шупашкар Сĕмĕлти шкула ҫĕнĕрен уҫма чупкаларăмăр. Ишутовсен пушă ҫуртне ун валли арендăлама килĕшнĕччĕ, анчах «перестройка» ҫапса хуҫрĕ. Участковăях ҫĕнĕ сăввисене радио урлă, пухусенче вулатчĕ. Иксĕмĕр те купăсҫăсем пулнипе ял Канашĕн машинипе е хамăннипе пĕчĕк ялсене те ҫӳренĕ, клуб ĕҫченĕсемпе /Г.Назаров баянист, С.Антонова/ концертсем лартса килнĕ. Кашни ялтах стена хаҫачĕччĕ, ял уявĕсене ирттернĕ. Пакунли сĕннипех «Чăнкасси пасарне» те пуҫланăччĕ. Николай Тарават сăвăҫ, Геннадий Хлебников писатель ҫуралнă ҫуртсем ҫине чаплă митингсем йĕркелесех хисеп хăмисем ҫакнă. ЧАССР тава тивĕҫлĕ механизаторĕ Р.Ярухин, мухтава тивĕҫнĕ Г.Истомин та хисеп хăмисемшĕн куҫҫульпех тав тунăччĕ. Паян пакунлисене вырăнти паллă ентешсем кирлĕ-ши?

20-30 хусахчĕ таврара. Хăшĕсем ĕҫкĕпе иртĕхсе пурăннă. Ҫавсене авлантарма шухăшларăмăр та. Хаҫатсенче пĕлтерӳсем тухсан, «Паллашу служби» ял Канашĕнче уҫăлсан хăшĕсем ҫемье ҫавăрчĕҫ. Йĕркеллĕ ҫемьесемех. Пур-ши паян ҫавăн йышши тĕслĕхсем? Илтмен! Иртнĕ вăрҫă ҫулĕсенче ял ҫывăхĕнче нимĕҫ салтакĕсен масарĕ пулнă. Кун пирки участокри тавра пĕлӳҫĕ Германиех ҫыру янă. Делегаци те ҫитнĕ унтан: тирпей-илем кĕртме.

Каласа-ҫырса пĕтерме ҫук самантсем. Участковăй ман алкумĕнчи чăланта та тăлăп пĕркенсе пайтах ҫĕр каҫнă. Ҫынсем шыраса, пулăшу ыйтса килех пынă вара. Литпĕрлешӳ те йĕркеленнĕччĕ. Унта вырăнти поэтсем Н.Давыдов, Ст. Куснар, А.Титов пысăк пулăшу панă. Валерий Пайраш шахмат клубĕ йĕркелени те ĕҫкĕҫсене эрех тыткăнĕнчен хăтарнă. Ҫĕнĕ Куснар-Чăнкасси автобус маршрутĕ уҫассине, ҫул тăвассине те участковăй пуҫарнă.

Тĕрлĕ пуҫтаха Сĕнтĕрвăррине 30-40 ҫухрăма турттарма хакла ларнипе шалти ĕҫсен пайĕн пуҫлăхĕпе В.Шипулинпа килĕшсе вырăнтах ял Канашĕн умĕнчи вутта татса ҫуртарнă. 1-мĕш хутрах карҫинкка цехĕ те уҫнăччĕ. Тĕрлĕ енлĕ, тĕрлĕ ĕҫпе иртнĕ пирĕн пурнăҫ. Вăл мана 1984 ҫулта пухура пакунлă вăрăсене критикленĕшĕн хăйне службăран хăтарнине каласа панăччĕ. Чунне парса ĕҫлетчĕ, хăйшĕн мар, халăхшăн. Унăн та ҫемье! Икĕ ывăл ҫитĕннĕ, вĕсене те воспитани кирлĕ-ҫке.

Октябрьскинче милици уйрăмĕ уҫăлни те – участковăй ĕҫĕ. Вăлах Шĕнерпуҫ, Чăнкасси Ҫатра, Октябрьски, Хуракасси, Кушкă ял Канашĕсен пуҫлăхĕсене, совхоз директорĕсене алă пустарса, пичет ҫаптарса КПСС Чăваш обкомне, СССР ШĔМне ҫырусем янăччĕ. Пулчĕ – усрĕҫ! Октябрьски тăрăхĕнче преступлени шучĕ чакрĕ.

Эпир – В.Исаев, В.Николаев директор – профком хуҫисемпе ШĔМ министрĕ патне А.Максимова майор званине пама сĕнӳ-хут та янăччĕ. Пурнăҫран уйрăлнă Валентин Янкăйпа Юрий Шевле сăвăҫтусĕсен кĕнекисене кун ҫути кăтартрĕ. Ап. Мартянов, Вл. Степанов, М.Илларионов, В.Греков, З.Пыркова ячĕсем те кĕнеке авторĕсен шутне кĕчĕҫ.

Чăнкасси, Шанар шкулĕсенче истори, литература, право урокĕсем иртернĕ. Ҫуллен иртекен «Кушар» уявра спорт ăмăртăвăсене йĕркелекенĕ те шутланнă. Ҫур аки пуҫланнине, пĕтнине, вырма вĕҫленнине, ытти уява чаплăн иртернĕ. 60-70-мĕш ҫулсенче трактор-машинăна техосмотра районти ПАИрен хăйсене чĕннĕ. 10-мĕш классене шофер прави парассине те участковăй пуҫарнăччĕ. Хуҫасăр ҫурт-йĕр чылайччĕ. Вĕсен хуҫисен хулари ачисен-тăванĕсен адресĕсене тупса участковăй чĕнтерчĕ. Ҫарату урăх ят ан пултăр тесе тăванĕ-кӳршипе ун йышшисене пăхса тăма килĕшӳсем турăмăр. Ҫуртсем ҫинчех яваплисен ячĕсене кăтартрăмăр.

...Ҫакă паян асра кăна. Ҫук халь ҫавнашкал участковăйсем. Питĕ шел...

**Николай КИРИЛЛОВ,**
**90-мĕш ҫулсенче Чăнкасси ял Канашне ертсе пынăскер,**
**Галина СТЕПАНОВА,**
**ял Канашĕн секретарĕ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ

КУРАВ

# Чăваш тĕрри пур чухне...

***Иртнĕ эрнере Шупашкарта «Халăх искусстви: актуаллăх. Этнокультура хутшăнăвĕсем. Аталанăвăн ҫивĕч ыйтăвĕсем» ыйтупа ăслăлăх практика конференцийĕ иртрĕ. Ăна ЧР Культура министерствипе Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен министерстви вăйĕпе йĕркеленĕ.***



Конференци вăхăтĕнче Чăваш Ен тата Тутарстан фольклорисчĕсен ăсталăх класĕсем пулчĕҫ. Унсăр пуҫне Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче Екатерина Ефремовăн ĕҫĕсен куравĕ уҫăлчĕ. Ăна республикăри тĕрĕ ăсти ҫуралнăранпа 100 ҫул ҫитнине халалланă.

Екатерина Ефремова пултарулăхĕ чăваш халăх тĕррине – ламран лама куҫса пынă йăлана – професси никĕсĕ ҫинче аталантарассипе ҫыхăннă. Ăна вăл чи ҫӳллĕ шая ҫĕкленĕ ҫеҫ мар, тĕнчене кăларнă. Екатерина Иосифовна эскизĕпе пурнăҫланă ĕҫсем Пĕтĕм Союзри, Раҫҫейри куравсене хутшăннă, чикĕ леш енчи ҫак ҫĕршывсенче – Аргентинăра, Бразилире, Индире, Бельгире, Грецире, Египетра, Японире, Канадăра, Кубăра, Турцире, Алжирта тата ыт. те – пулнă. Хальхи вăхăтра чылай произведенийĕ тăван республикăн, Мускавпа Питĕр музейĕсен фонĕсенче упранать.

Юбилей куравне Чăваш Ен культура министрĕ Вадим Ефимов, Чăваш Республикин Пуҫлăхĕн канашçи, искусствоведени докторĕ Михаил Кондратьев хутшăнчĕҫ, сăмах каларĕҫ. Лариса Семечкина искусствовед Екатерина Ефремова пурнăҫĕпе, пултарулăхĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ. Унăн кун-ҫулĕ пĕтĕмпех пирĕн – чăваш сумне, чысне, мăнаҫлăхне, илем ăс-хакăлне – ҫĕклессипе ҫыхăннине тĕслĕхсемпе ҫирĕплетрĕ.

Паян чăваш тĕрри малалла пурăннинче, аталаннинче ентешĕмĕрĕн тӳпи вышкайсăр пысăк. Чăваш тĕрри пур чухне Екатерина Ефремовăн ячĕ те упранĕ.

**Надежда СМИРНОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш ҫурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

**Информация об итогах аукциона по продаже права на заключение договоров аренды земельных участков**

Министерство имущественных и земельных отношений Чувашской Республики сообщает, что аукцион, открытый по составу участников и по форме подачи предложений о цене права на заключение договоров аренды земельных участков, находящихся в государственной собственности Чувашской Республики, проведенный 21 октября 2014 года в соответствии с распоряжением Минимущества Чувашии от 08.09.2014 № 798-р, признан несостоявшимся.

Администрация Чебоксарского района извещает о намерении предоставления в аренду сроком на 10 лет земельного участка площадью 9,0921 га с кадастровым номером 21:21:181202:80, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Шинерпосинское сельское поселение (земли сельскохозяйственного назначения), для сельскохозяйственного производства. Заявления и письменные возражения принимаются по адресу: 429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д.15 (каб. 20).Телефон для справок (8-83540) 2-40-82.

**ПРОДАЮ**

**7. Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

чăваш халăх хаҫачĕ
ХЫПАР
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство ҫурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учреждений̆ĕ
Федерацин ҫыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 ҫулхи ҫу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор ҫумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор ҫумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор ҫумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуҫлăхĕ/
Дежурнăй редактор А.В.СЕРГЕЕВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет ҫурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор ҫумĕ
56-04-17 – тĕп редактор ҫумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăҫĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куҫару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăҫпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – ҫырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреҫ
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕҫ кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуҫласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пусне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаҫата «Хыпар» Издательство ҫурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаҫатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама ҫинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану ҫулĕпе", "Ят-сум", "Ĕҫ тата ҫын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 28.10.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7384. Заказ 4120.